# Ача-пăча саккуна пăсни экономикăри лару-тăрупа çыхăннă ● 5 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш хĕрарăмĕ

29(951) №, 2016, утă/июль, 30

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

● Сакăр лаша пек ĕçлекен хĕрарăм 2 стр.
● Кашкăртан çăлăнма… кĕнеке пулăшнă 4 стр.
● Авăн уйăхĕнче ППЭ тепĕр хут тытма май пур 3 стр.
● Инди суханĕпе мĕнле усă курмалла? Кактус мĕншĕн çурăлмасть? 8 стр.
● Упраймарăм савнине… 9 стр.
● Çăва çинчи… Ача çурчĕ 11 стр.

ÇĂЛТĂР ÇŬПÇИ

## Халăх ыррине шанать



Валерий РАШТАВ, сăвăç

– Ĕçлекен халăха шалу ытла та сахал тӳлени пăшăрхантарать мана. 7-8 пин тенкĕ çемьене тăрантарма, çав вăхăтрах хваттер укçи тӳлеме, тумтир туянма, ытти тăкака саплаштарма ăçтан, епле çиттĕр? Ытларах ку бюджет тытăмĕнче вăй хуракансене пырса тивет. Пирĕн республикăра завод-фабрика сахал, вăйпитти çыннăн ĕç вырăнне ăçта шырамалла? Пурте фермер пулаймаççĕ-çке. Ирĕксĕрех арçынсем Мускава е çурçĕре ĕçлеме тухса каяççĕ. Çемьене тытса тăрассишĕнех мăшăртан, ача-пăчаран уйрăлма тивет. Ĕçкĕ аварне путнисемшĕн тĕнче тикĕс. Вĕсем кунта та вăй хумаççĕ, кутамкка çакса аякка та каяс çук. Хамăр республикăрах тупăш паракан предприятисем йĕркелесен аванччĕ те. Тахçан, 1990 çулсен пуçламăшĕнче, Патăрьелте сахăр завочĕ уçасшăнччĕ. Ĕçе ниепле те вĕçне çитерейменрĕç. Кирлĕ пулмарĕ-ши? Ĕç çуккине пулах ялсем пушанса юлаççĕ. Шкул хыççăн ялта халь пĕр çамрăка та хăвараймăн, пурте хулана туртăнаççĕ. Алла диплом илнĕ хыççăн та тăван тăрăха илĕртейместĕн. Пĕрремĕшĕнчен, лайăх ĕç вырăнĕ çук, иккĕмĕшĕнчен, шалăвне тӳлемеççĕ. Хальхи çамрăксем пушшех те пĕчĕк укçашăн пилĕк авмаççĕ.

Ерипен пулин те, пирĕн республикăра чăвашлăх аталансах пырать. Çакă питĕ савăнтарать мана. Чăваш наци радио, Тăван радио, Наци телекуравĕ, ЮТВ канал та пур халь пирĕн. Туйсенче, ташă каçĕсенче те чăваш юррисем янăраççĕ. Республикăра тинех тăван чĕлхепе калаçма вăтанма пăрахрĕç. Чăваш юррисене вырăссемпе тутарсем те хаваспах шăрантараççĕ. Хамăр та çаплах пулнă-ши – 15-16 çулсенчи çамрăксем музыка итлеме юратаççĕ. Вăл е ку юрра кам юрланине, çав шутрах чăваш эстрада юрăçисене те, йăлтах пĕлсе тăраççĕ.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Еншĕн тăрăшни курăнать. Хăй те ялтан тухнă май çĕр ĕçченĕсене сума сăвать, тĕрлĕ района çитсе вĕсен пурнăçĕпе кăсăклансах тăрать. Хулара çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем хăпараççĕ. Шупашкар та куллен-кун илемленсе пырать. Темле йывăрлăха та чăтма хăнăхнă пирĕн халăх. Пуç çĕклемесĕр ĕçлет вăл, малаллах талпăнать. Яланах ыррине шанать. Паянхи йывăрлăхран та тухатех пуль-ха.

Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
| --- | --- | --- |
| 30.07 | +30 | +21 |
| 31.07 | +29 | +22 |
| 01.08 | +30 | +21 |
| 02.08 | +29 | +21 |
| 03.08 | +29 | +21 |
| 04.08 | +30 | +22 |
| 05.08 | +31 | +22 |



Елена АТАМАНОВА сăнÿкерчĕкĕ

4 стр.

## Ăшă çунат айĕнче

– Анне, купăста шăварам-и? Манăн хăш йăранне çумлас? – амăшĕ хыççăнах çӳреççĕ Юльăпа Артем.

Виçĕ çул каялла Елчĕк районĕнчи Тӳскелти Максимовсем Канаш районĕнчи икĕ шăпăрлана, аппăшĕпе йăмăкне, çемьене илнĕ.

– Юльăна Çĕмĕрлери ача çуртĕнчен хĕллехи каникула илсе килтĕмĕр. Пирĕн патра ăна питĕ килĕшнĕ. Кайран кашни кун шăнкăравлама пуçларĕ. Хамăр та хĕр пĕрчине хăвăрт хăнăхрăмăр, вăл кайсан пӳрт пушанса юлнăнах туйăнчĕ. Ашшĕпе амăшĕ Канашра пурăнаççĕ. Ачисене йĕркеллĕ пăхманран, сывă пурнăç йĕркине пăхăнманран тĕпренчĕкĕсене темиçе хут та туртса илнĕ, ĕçме пăрахсан çемьене каялла таварса панă. Халь тин улшăнас çук вĕсем. Паянхи кун ашшĕ-амăшне ачисем пачах та кирлĕ мар, манăн шухăшпа, кун-каçа та аса илмеççĕ пуль шăпăрлансем пирки. Иккĕшĕ те таса-сывă, вăйпитти, чĕрех. Ывăл-хĕрне килсе курас шухăш та çук вĕсен, çул укçи пĕтерсе çӳриччен кĕленче туянаççĕ ахăртнех, – каласа кăтартать кил хуçи арăмĕ Алена Владимировна.

Сăмах май, Алена Максимова чылай çул Елчĕкри опекăпа попечительство уйрăмĕнче ĕçленĕ, халĕ шкулта социаллă педагогра тăрăшать. Пĕчĕкскерсене чунтан хĕрхенниех Юльăпа Артема çемьене илме хистенĕ ăна.

– Юрать, хӳтлĕхсĕр юлнисене усрава илсе чун ăшши парнелекенсем пур. Çавна май республикăра тăлăхсен шучĕ чаксах пырать. Икĕ ача пур çĕрте виççĕмĕшĕ те, тăваттăмĕшĕ те ытлашши мар. Мăшăрăм Саша пĕчĕк ачасемсĕр пурăнаймасть. Малтан пĕр хĕрача çеç илме шухăшланăччĕ эпир, анчах та тăвансене уйăрма юрамасть. Хамăрăннисем ӳссе çитĕнчĕç. Вĕсемпе малтан канашларăмăр, хирĕçлекен пулмарĕ. Влада кăçал ЧПУ медицина факультетĕнчен вĕренсе тухса стоматолог специальноçне алла илчĕ. Çак кунсенче хĕре качча парса туй кĕрлеттертĕмĕр. Павлик ЧПУри машиностроени факультетĕнче 2-мĕш курсра вĕренет, – çемйипе паллаштарать Алена Владимировна.




ВĂРĂМ ĔМĔРЛИСЕМ

# Ăшă кăмăллă, вĕри чунлă

**100 çула çитнĕ, унтан та ытларах пурăннă е пурăнакан çынсен кун-çулĕпе таçанах кăсăкланнă май эпĕ вăрăм ĕмĕрлисем пирки нумай çыратăп. 1916 çулта çуралнисем пирĕн тăрăхра хальлĕхе пĕрре çеç: Алманчри Ольга Спиридонова. Кĕтнĕ самант çитрĕ: утă уйăхĕн 22-мĕшĕнче вăл пĕр ĕмĕр тултарнине паллă турĕ. Анчах та çакна каласа хăвармалла: районта хальлĕхе унран та нумайрах пурăнакан тата иккĕн пур: кăçал акан 5-мĕшĕнче 103 çула кайнă Ирина Орлова /Пулайкасси/ тата кăрлачăн 7-мĕшĕнче 102 çула кайнăВаснарти Валентина Новоселова. Малашне те çут тĕнче илемĕпе киленсе ĕмĕрĕсене тăсчăр-ха сумлă ватăсем.**



Иртнĕ кунсенче Алманч ялне çул тытрăм. 1969 çулта туса лартнă йывăç çурта тултан хăтлăх кĕртнĕ. Кунта чăн-чăн алă ăсти пурăнать тейĕн. Вырăн çинче ларакан тăп-тăп кĕлеткеллĕ, илемлĕ пит-куçлă, тирпейлĕ тумланнă кинеми пирки ниепле те 100 çулта тесе калаймастăн. Пичĕ çинче пĕркеленчĕк те çук пек, куçĕ те чăр-чăр! пăхать. Сăнĕнче хаваслă кулă палăрать..

Юбиляра алă тытса сăмах пуçтартăм. Унăн малтанхи сăмахĕсем шухăша ячĕç: «Ай-уй, сан аллу манăннинчен те сивĕрех!» Вăт епле иккен: ăшă кăмăллă çыннăн чунĕ хĕрӳрех-мĕн!

Юбиляр çак ялтах çуралнă. «Ямшăк таврашĕ», – тенĕ вĕсене. Улттăн çитĕннĕ вĕсем: Хветус, Санькка, Улькка, Çемен, Кулине, Урине – 5 хĕр те 1 ывăл. Хĕрĕсем пурте ял хуçалăхĕнче тăрăшнă, пĕртен-пĕр ывăлĕ Семен Спиридонович малтан летчик пулнă, кайран – ăсчах: философи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор. Паян вара пурăнаканни пĕр Улькка çеç.

Ольга Спиридоновна шкулта вĕренмен, çапах та вулама-çырма, алă пусма пĕлнĕ. Килти ĕçсенче питĕ правур пулнă. Хитре хĕре каччăсем те куç хывнă ĕнтĕ. 1937 çулта вăл çак ялах Иван Прохорова качча тухать. Унпа вĕсем 60 çул пĕрле пурăннă. Кил хуçи 1997 çулхи кăрлачра 80 çула çитсе çĕре кĕнĕ. Иван Прохорович механизаторта ĕçленĕ. Вăрçăччен ĕçре куçне амантнă, çавăнпа ăна фронта илмен. Вăл тылра вăй хунă. Астăватăп-ха, Иван Прохорович пĕр хушă куç курманнисен обществин ертӳçинче те ĕçлерĕ...

Мăшăр пурĕ 9 ача çуратнă. Питĕ шел, виççĕшĕ ача чухнех вилнĕ. Улттăшĕ чиперех ӳссе çитĕннĕ, çемьеллĕ пулнă. Ывăлĕсем – Леня, Çеруш, Валерик – ашшĕ çулĕпе кайнă: трактористра тăрăшнă. Каллех вĕсене иртнĕ вăхăтпа çеç асăнмалла: вĕсем те çĕре кĕнĕ. Тепĕр висĕ ачи тĕрĕс-тĕкелех пурăнаççĕ: пурте – пенси çулĕнче. Райка вăтам шкул хыççăн техника училищи пĕтернĕ, Шупашкарти В.И.Чапаев ячĕллĕ заводра мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччченех вăй хунă. Саша – строитель, Зоя – предприниматель.

Мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсене шутласа кăлараймарĕç килтисем, мĕншĕн тесен инçетре пурăнаканнисен çемье хушăнсах пырать вĕт.

Упăшкинчен 80 çулта юлнă хыççăн хĕрарăмшăн пурнăç тĕксĕмленнĕ пекех туйăннă. Çапах та алран ĕç яманни, ывăл-хĕрĕ хӳтлĕх парса тăни ăна хавхалантарнă. Хĕрĕ Райка ăна 20 çул пăхса пурăнать. Ольга Спиридоновна ялта хăйне аванрах туять. Кунта йăлтах чуна çывăх-çке: тăвансем, пускилсем, мăшăрĕпе пĕрле çĕкленĕ çурт-йĕр, хуралтăсем... Раиса Ивановна лайăх пăхать амăшне. Ялта хисеплĕççĕ ăна. Вăл халăхшăн, обществăшăн ĕçлесе пенсие тухнă, çав пархатар унăн яла та пĕрлех килнĕ: вăр-вар та çивĕч ăс-тăнлă хĕрарăма ял тăрăхĕнче часах асăрханă – Алманч ял старости халĕ вăл. Кĕске вăхăтрах курăмлă ĕççем туса ирттерме пултарчĕ вĕри чун-чĕреллĕ ертӳçĕ. Ĕмĕчĕсем пысăк-ха унăн: пылчăклă урамсене хытă чул сартарасшăн. Халăх пĕр шухăшлă пулсан, вырăнти пуçлăхсем пулăшсан – пурнăçланатех. Пултарулăх ушкăнне те çӳрет, концертсене хутшăнать. Раиса Ивановна çавăнпа пĕрлех амăшне пăхма, кил-çурта юсаса тытса тăма, хуçалăхри мĕнпур ĕçе тума та ĕлкĕрет. Арçын ĕçне те тиркесе тăмасть: строитель те вăл, техникăна та парăнтарать. Мотоблок туянни пушшех те çăмăллатнă пурнăça. Сăмах май каласан, ывăлĕпе хĕрĕ – Андрейпа Августина – иккĕшĕ те аслă шкул пĕтернĕ. Халĕ Мускавра ĕçлесе пурăнаççĕ, яла килсех çӳреççĕ.

Ольга Спиридоновна 1986 çулта операцие тӳссе иртнĕ хыççăн больницăна урăх çӳренине каламарĕç. Апат тиркемест, пылак юратать. Ятарласа икĕ качака тытаççĕ килте. Унăн сĕчĕ паха та усăллă-çке. Эрехсăрапа нихçан та иртĕхмен. Мăшăрĕпе хăнана кайсан та ӳсĕрĕлмесĕрех «Пирĕн урам анаталла...» юрласа килнине астăваççĕ ачисем. Питĕ лăпкă та хавас кăмăллă хĕрарăм, хитрелĕхе юрататъ.

Ялти ырă çынсем Ольга Спиридоновнăна «Эсĕ 105 çул пурăнатăн!» – тени чăна килтĕрччĕ.

**Николай ЕРШОВ.**
Красноармейски районĕ.

# Сакăр лаша пек ĕçлекенскер



– Сывах-и, Еля аппа? Мĕнле пурăнатăн? – калаçса иртсе каять килĕ умĕнчи сак çинче ларакан ватă хĕрарăмпа иртен-çӳрен. Кӳршĕ ял çыннисем те тараватх унпа.

Шăмалакри Еля аппа çу уйăхĕн вĕçĕнче 90 çул тултарчĕ. Елена Усанова ĕмĕрне ĕçлесе ирттернĕ. Ачалăхĕ унăн вăрçă кунĕсене лекнĕ. Арçынсем вăрçа тухса кайсан хĕрарăмсемпе ачасем йывăр ĕçе кӳленнĕ.

Хĕрача торф кăларма та, вăрман касма та, вăкăрпа тырă турттарма та кайнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен ашшĕне тата икĕ тетĕшне кĕтсе илеймен. Вĕсем Тăван çĕршыва хӳтĕлесе çапăçу хирĕнче пуç хунă.

Еля аппа хăйĕн аппăшĕпе тăлăххăн ӳснĕ. Ĕçпе писĕхнĕ хĕр нимĕнле йывăрлăхран хăраса тăман, колхоз хирĕнче ялан малтисен ретĕнче пулнă.

– Еля, сакăр лаша та сан чухлĕ ĕçлеймест пулĕ, – çаплаканă ун пирки «Слава» колхоз ертӳçи Иван Денисов.

Вăл кӳршисене те, тăванĕсене те май пур таран пулăшса пынă.

Ырă çынна ял савать теççĕ. Çак ырă та тараватх пирĕшти пек хĕрарăм хĕрĕпе ывăлне тата висĕ мăнукĕпе вĕсен ачисене кăмăлĕпе ăшăтса пурăнать. Уяв, кану кунĕсенче инçе çула кĕскетсе ялан килеççĕ Шăмалака çывăх тăванĕсем. Пахчаçимĕç çитĕнтерме пулăшаççĕ, кĕрхи ĕçсем пĕтсен вара канма килеççĕ.

**Л.ЧЕРНОВА.**
Елчĕк районĕ.

КУН-ÇУЛ

# Хастарлăхне çухатман

Зоя Плотникова хăйĕн пурнăçĕ çинчен ачалăхран пуçласа паянхи кунччен хумханса, çав вăхăтрах савăнса каласа пачĕ.

«1935 çулхи çĕртме уйăхĕн 25-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Çичпӳрт ялĕнче çуралнă вăл. Атте-анненe астумастăп. Анне эпĕ висĕ çулта чухнех вилнĕ. Атте пирĕн ылтăн алăллă çын пулнă: кăмака тунă, атă-пушмак юсанă… Унăн пысăках мар арманне çынсем тырă авăртма çӳренĕ. Ялтан темиçе çемье куçса кайнă чухне атте те аслă пиччепе пĕрле Казахстана çул тытнă. Эпир, ачасем, тăваттăн хамăрах пурăннă. Пире аслă аппа Клавдия пăхнă. Атте питĕ куляннипе чирлесе кайса икĕ çултан Казахстанрах вилнĕ. 1927 çулта çуралнă Егор пичче салтака кайнă хыççăн киле каялла таврăнман. Вăл Куйбышев облаçĕнчи Сызрань хулинче ĕçлеме юлнă. Аслă аппа Клавдия колхозра ĕçленĕ. Мана, кĕçĕннине, вăл питĕ тăрăшса пăхнă. Çурлапа тырă вырнă чухне пирĕн Клавдие, Хветла аппапа Маюк аппана çитекен çук тетчĕç. Каярах вара аппа сурăх ферминче ĕçленĕ. Ӳссен мана Шупашкара пĕр çемьене ача пăхма илсе кайрĕç, каçхи шкула вĕренме вырнаçтарчĕç. Ĕçлеме ӳркенмен эпĕ, дачăра çум çумланă, шăварнă. Паянхи кун та вĕсен мăнукĕсемпе çыхăнăва çухатман.



Пĕр-икĕ çул пурăнсан Ваççили пичче мана каялла илсе килчĕ, вĕсен ачисене пăхма лекрĕ. Ялта тӳрех комсомол секретарьне суйларĕç. Çав вăхăтра колхоза вăрман касма план панăччĕ. Эпĕ комсомол секретарĕ пулнă май ялта клуб тума йывăç кирлĕ тесе колхоз председательне пĕлтертĕм. Тăхăр çамрăка пуçтарса Вологда облаçне йывăç касма илсе кайрĕç. Пулас мăшăрпа Евгений Владимировичпа унта паллашрăм. Вăл Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси ялĕнченччĕ. Каçхине ĕçрен пушансан çынсене кĕпесем çĕлесе параттăм.

Эпĕ тăрăшнипех Çичĕпӳртре клуб хăпарса ларчĕ. Колхоз председателĕ Аркадий Мочалов мана пĕррехинче çапла каларĕ: «Клуб хăпартас тесе хăв питĕ тăрăшрăн, анчах унта ташласа та кураймарăн, урăх яла качча тухрăн».

Хуракасси ялĕнче 1956 çултанпа пурăнать Зоя Плотникова. Качча пынă чухне упăшкин пӳрчĕ питĕ начар пулнă. Мăшăрĕпе иккĕшĕ тăватă уйăхлăха Киров вăрманне йывăç касма кайнă. Кăштах укçа пуçтарнă хыççăн хĕллене пӳрт туса кĕнĕ. Семеновкăри тăванĕ-пĕтенĕ кӳршисем питĕ пулăшнине калать хĕрарăм.

Тивĕçлĕ канăва тухиччченех фермăра ĕçлет вăл. Тăрăшулăхĕшĕн Ĕç Мухтавĕн орденне тивĕçет. Тав хучĕ, ытти медаль те пур унăн.

Ултă ача çуратса ӳстереççĕ упăшкипе иккĕшĕ. Тĕслĕх шайĕнчи çемьене «Юратупа шанчăклăх» орденпа чысланă.

80 çул тултарнă пулин те хастарлăхне çухатман Зоя Ивановна. Хальхи вăхăтра хĕрарăм пĕччененех пурăнать пулин те хурт-хăмăр пăхать, тăрăшсах мăнукĕсене ура çине тăма пулăшать.

**Маргарита МИХАЙЛОВА.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

ЛАРУ

# Михаил Игнатьев Мускавра пулчĕ

***Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра ĕçлĕ визитпа пулнă май РФ Правительствин Регионсен аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссийĕн пĕрремĕш ларăвне хутшăннă.***

Унта РФ Президенчĕн «Раççей Федерацийĕн Регионсен аталанăвĕн патшалăх политикин никĕсĕсене 2025 çулччenхи тапхăрччен çирĕплетесси çинчен» указĕн проектне пăхса тухнă. Ларăва РФ Правительствин Председателĕн заместителĕ Дмитрий Козак ирттернĕ.

Раççей Федерацийĕн Регионсен аталанăвĕн патшалăх политикин 2025 çулччeнхи тапхăрти никĕсĕсем Раççей регионĕсем валли тĕп документ пулĕç. Указ проектĕнче регионсен аталанăвĕн тĕп тĕллевне палăртнă: çĕршывăн социаллă пурнăçпа экономикин тăнăçлă аталанăвне регионсемпе хуласен хăй тĕллĕн аталанассин вăй-хăватне туллин усса, граждансене пурăнма хăтлă условисем туса хурса тивĕçтересси.

**Хамăр инф.**

СПОРТ

# Олимпиадăна чăвашсем те хутшăнаççĕ

Допинг историйĕсене пула кăçалхи Олимп вăййисене пирĕн пĕр спортсмен та хутшăнмасан та пултарасси спортпа кăсăкланакансене çеç мар, пурне те сисчĕвлентерчĕ, кăмăлăмăрсене хуçрĕ. Утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче Лозаннăра иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕн ĕçтăвкомĕн ларăвĕнче çеç допинг историйĕнче нихăçан та усал-па палăрман Раççей спортсменĕсен чи пысăк ăмăртăва хутшăнма ирĕк пуррине палăртнă. Шел, «тасисене» те пурне те «симĕс çутă» паман.

Чăваш Енрен Олимп вăййисенче тăватă спортсмен тупăшĕ. Республика тата Раççей чысне хÿтĕлекенсен йышĕнче – Ирина Калентьева. Вăл маунтинбайк çăлтăрĕ. Тата висĕ ентешĕмĕр – Раççей пĕрлештернĕ спорт гимнастикин ушкăнĕнче. Пултарулăхне Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен Çĕнĕ Шупашкарти 1-мĕш спорт шкулĕнче туптакан Дарья Спиридонова тĕп старта тухма хатĕрленет. Улатăрти спорт гимнастикин шкулĕн воспитанникĕ Евгения Шелгунова тата Олимп резервĕсен ятарлă 6-мĕш спорт шкулĕн вĕрененекĕ Вячеслав Поляшов – резерврва.



Сăмах май, РФ спорт министрĕ Виталий Мутко пĕлтернĕ тăрăх, паянхи кун тĕлне федерацисем Раççей 272 спортсменне Олимпиадăна хутшăнма ирĕк панă. Çапах та ку юлашки пăнчă мар. Тепĕр темиçе спортсмен тĕлĕшпе ыйту татăлман-ха. Хальлĕхе палăртнă тăрăх, Рио-де-Жанейро хулинче Раççей чысне пурĕ 286 спортсмен хÿтĕлес шанăç пур.

Раççей спортсменĕсен пĕр ушкăнĕ утă уйăхĕн 29-мĕшĕнче Рио-де-Жанейрона çитнĕ. Наци командине аэропортра «Калинка» кĕввипе ташласа, «Катюша» юрласа кĕтсе илнĕ.

«Корея хăйĕн çăлтăрĕсене оркестрпа кĕтсе илнине пĕлетĕп. Кун пеккине вара халиччен курманччĕ», – тенĕ аэропорт хăрушсăрлăх службин ĕçченĕсем.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

ВĔРЕНТӲ

# Экзамен – тепĕр хутчен

**Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсене авăн уйăхĕнче тепĕр хутчен ирттерĕç. Икĕ предметпа – вырăс чĕлхипе тата математикăпа /база шайĕнче/ – тытма май пулĕ вĕсене. Çакна çирĕплетсе РФ Вĕрентÿпе ăслăлăх министерстви кăçалхи экзаменсем çинчен калакан хушăва улшăну кĕртнĕ.**

Унпа килĕшÿллĕн, вырăс чĕлхипе тĕрĕслеве авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче, математикăпа 8-мĕшĕнче çырма пулĕ. Авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче асăннă икĕ предметпа та экзамен иртĕ.

Авăн уйăхĕнчи экзамена 11 класс хыççăн патшалăх аттестацине тухайман е асăннă икĕ предметран пĕринпе е иккĕшĕнпе те «2» паллă илнĕ яшсемпе хĕрсем çыраяççĕ. Малтанхи çулсенче е кăçал аттестат илнисен паллăсене лайăхлатма ирĕк çук.

Авăн уйăхĕнче экзамен тытас кăмăллисенчен ыйтăва çурлан 8-мĕшĕнчен пуçласа 22-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Экзамен ирттерме федерацин кашни регионĕнчех 1-3 ятарлă пункт йĕркелĕç. Унта онлайн мелĕпе видеосăнав та пулĕ. Тĕрĕслев ĕçне висĕ кунра пăхса тухĕç.

**Татьяна НАУМОВА.**

ТУРИЗМ

# Хăнасене хапăл

Сĕнтĕрвăрри районĕнче юлашки çулсенче туризм вăй илсех пырать. Кунта ятарлă турмаршрутсем те пур, уйрăм мероприятисем те ирттереççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕпе паллашасси СССР космонавтлетчикĕ Андриян Николаев ячĕллĕ мемориал комплексне çитнинчен пуçланать. Кунта ентешĕмĕрĕн пурнăçне туллин сăнланă.

Маршрут çулĕ çинчех – «Новинск картишĕ». Кунта тĕрлĕ халаппа пуян ял историйĕпе паллаштараççĕ. Хăнасене халăх хорĕ юрă-ташăпа савăнтарать. Кил-çуртпа унта пурăнакансене пукане тума та вĕрентеççĕ, наци апачĕпе те хăналаççĕ. Ку проект – пĕтĕм Раççейри «Пĕчĕк хуласемпе ялсенчи культура мозаики» конкурс çĕнтерÿçи.

**Алина АНТОНОВА.**

«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2017 çулăн пĕрремĕш çурринче илсе тăмашкăн çурла /август/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен пĕлтĕрхи хаксемпе çырăнтараççĕ.
Аса илтеретпĕр: пирĕн хаçатсемпе журналсене кирек хăш уйăхран та илсе тăма пулать.
Сăмахран, «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата çурла уйăхĕн 25-мĕшĕччен çырăнсан
ăна авăн уйăхĕнчен почтальон пырса пама тытăнĕ.
«Советская Чувашия» хаçатăн киоскĕсенче тата редакцире – йÿнĕрех те.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Тĕтĕм-сĕрĕм пуçа минретет

Елена АТАМАНОВА

**Кунĕпех хупă тăнă хваттерте каç еннелле пăчă. Ĕçрен киле таврăнсанах чÿречесене яри уçса пăрахатпăр. Çурт умĕнчен пирус мăкăрлантаракансем вăшлатса иртеççĕ, çăра тĕтĕм сăмсана кÿ-ÿ пырса çапать. Эх, строительство компанийĕ 12-мĕш хутра хваттер сĕннĕччĕ, мĕншĕн çÿлте илме килĕшмерĕмĕр-ши? Аялти хутрисемпе танлаштарсан унта сывлăш та тасарахчĕ пулĕ. Подъезда кĕрсен те хăш чухне тĕтĕм шăрши туйăнать. Чарăнура та çав тĕслĕхех, ĕçе кайнă чухне те, таврăннă май та пуçа сĕрĕм минретет. Пирус туртакан – йĕри-таврах. Шăрăх çу кунĕсенче ĕçре витĕр çилсĕр ларма çук, çавна пулах кантăкпа алăка уçатпăр. Сăмсана каллех пирус шăрши пырса çапать. Çук, çук, пирĕн ĕçтешсем мар, урăх организацире вăй хуракансем мăкăрлантараççĕ. Урама тухма ÿркенеççĕ-ши? Юрать, килте пирус туртакан çук.**

**Тĕтĕмпе сывлани пирус туртнинчен те сиенлĕрехçке. Апла никотинран епле хÿтĕленмелле-ха?**

**2013 çулхи çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнчен табак туртакансемпе кĕрешес тĕллевпе саккун йышăннăччĕ. Раççей çыннисене кашни утăмра тинех туртма чараççĕ тесе савăннăччĕ ун чухне. Саккуна пăхăнас пулсан общество вырăнĕсенче, вĕренÿ, спорт, культура объекчĕсенче, сиплев учрежденийĕсенче, самолетра, пассажирсен транспортĕнче, вокзалта тата унăн çумĕнче, метро станцийĕсенче, социаллă службăсен, патшалăх влаçĕн органĕсенче, муниципалитетсенче, ĕç вырăнĕнче, лифтра, подъездра, ача-пăча лапамĕнче, пляжра пирус туртма юрамасть. Саккунтан иртме хăтланакансене штрафлама йышăннăччĕ. Килте туртма вара никам та чармасть. Çынсене çакă шар кăтартать те. Пĕлĕшĕм общежитире пурăнать. Кÿршĕри вырăс кинеми кунне темиçе хутчен чÿрече е алăкне уçса пÿлĕмрех туртать, тĕтĕм-сĕрĕмĕ юнашарти патне пырать. Кутăн кинемие ÿкĕте кĕртме çук, вăл килте туртать-çке. Урама тухма ури ыратать ватăскерĕн. Тĕтĕмĕ коридорта сарăлни, тепĕр çын организмĕ сиенленни пĕлтерĕшлĕ маруншăн.**

**Çапах та саккун – саккунах. Табак продукцине сутакансем тĕлĕшĕпе те йĕрке чылай çирĕпленчĕ юлашки висĕ çулта. Лавккана кĕрсен малтанхи пек тÿрех куç тĕлне пулмасть сигарет курупки. Çул çитменнисене пирус тыттарса яракансене 90 пин тенкĕ таран штраф хума е вĕсен ĕçне 3 уйăхлăх чарса лартма ирĕк пур. Пичет кăларăмĕсемпе Интернетра табак реклами çухалчĕ. Саккуна пăхăнмасан 500 пин тенкĕ кăларса хума тивет. Сигарет курупкин сăнĕ те улшăнчĕ. Наркăмăш туянакана мĕн кĕтнине асăрхаттарса çырнисĕр пуçне чуна сисчĕвлентерекен ÿкерчĕк вырнаçтарчĕç: ура çĕрме тытăнни, ÿпкен усал шыççи, ача вилĕ çурални, шăл сарăхса патракланни тата ытти те.**

**Сывлăх сыхлавĕн пĕтĕм тĕнчери организацийĕн кăтартăвĕ тăрăх – пирус туртассипе Раççей пĕрремĕш вырăн йышăнать. Чăваш Ен халăхĕн пĕрре виççĕмĕш пайĕ никотинпа туслă. Мĕнпур йышăн 80 проценчĕ общество вырăнĕнче сигарет мăкăрлантарма чармаллах тесе шухăшлать.**

**Пирĕн республикăра пирус туртакансемпе тахçантанпах çине тăрса кĕрешеççĕ. ЧР Сывлăх сыхлавĕн министерстви кăçал çĕнĕ проект хатĕрленĕ. Ăна Правительство ларăвĕнче хÿтĕленĕ. Малашне çын йышлă çÿрекен вырăнта, нумай хваттерлĕ çуртсен таврашĕнче, уяв-мероприяти иртекен тĕлте пачах та тĕтĕм мăкăрлантарма юрамасть. Йĕркене пăсакансене административлă явап тыттарĕç. РФ Патшалăх Думине те çĕнĕ саккун кĕртнĕ. Электрон сигарета малашне сахалрах рекламăлама тытăнĕç. Çавăн пекех сигарета блокпа /20 курупка ытларах пулсан/ сутма чарĕç.**



ХЎТЛĔХ

# Ăшă çунат айĕнче

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

12 çулти Юля кăçалхи вĕренӳ çулне мĕнпур «пиллĕкпе» вĕçленĕ. Ташлама-юрлама тата математика предметне юратать вăл. 7 çулти Артем пĕрремĕш класа кайма хатĕрленет. Шкул валли хут-кăранташ хатĕрлеме тытăннă та ĕнтĕ вăл. Часах калаçайман арçын ача, тăватă çула çитнĕскер «атте», «анне» тенисĕр пуçне урăх пĕр сăмах та калайман. Çемьене килсенех улшăннă вăл, саспалли вĕренме, шутлама, сăвă пăхмасăр калама тытăннă.

Артемпа Юля Алена Владимировнăпа Александр Ивановича пĕрремĕш кунранах «анне-атте» тесе чĕнеççĕ. Малтан вырăсла çеç калаçнăскерсем халь чăвашла та пĕлеççĕ.

– Мĕн хушнине итлеççĕ, кутăнлашмаççĕ. Ача çуртĕнче пурăнни, йывăр çемьере ӳсни пăртак сисĕнет паллах. Пахчара шăварма юратаççĕ. Йăрансене Юльăпа пĕрле çумлатпăр, урай та пĕрле çăватпăр, – каласа кăтартать Алена Владимировна.

Максимовсен çемйи ĕçе юратать. Пĕр вăхăт çичĕ ĕне таранах тытнă вĕсем. Халь те картиш тулли выльăх-чĕрлĕх. Пахчаçимĕçне яланхи пекех сутмалăх та çитĕнтереççĕ.

– Владăпа Павлике ĕçпе пиçĕхтерсе ӳстертĕмĕр. Пĕр касрисем халь те аса илеççĕ, хĕрĕм хăй те фляга çӳллĕш кăначчĕ, пĕрле сĕт пуçтарма çӳретчĕ. Çемьере асли пулнăран-и, пĕчĕкрен яваплăха туйса ӳсрĕ вăл. Павлик пысăкланнăччĕ ĕнтĕ, шăллĕ хĕллехи вăхăтра пăр çинче шуса ӳкесрен шикленсе Влада ялан ăна алăран çавăтатчĕ. Юльăпа Артема пĕрмай: «Владăпа Павлик пек пулма тăрăшмалла, лайăх вĕренмелле, ялан малалла ăнтăлмалла, аслисене итлемелле», – тесе вĕрентетĕп. Хăлхине чикеççĕ-и, çук-и? Чи кирли – сывлăх тĕлĕшĕнчен чиперех. Артемпа кĕçĕн класра килте вăрахчен вĕренсе ларма тивĕ. 4 çулта та калаçайманскере шкула кайсан йывăртарах пулассăн туйăнать, – палăртать Алена Владимировна.

Çирĕп хуçалăх тытаççĕ Максимовсем. Типтерлĕхпе тасалăха юратни урамранах курăнать. Пӳрт умĕнчи пахчара та, анкартинче те вун-вун тĕрлĕ чечек хĕмленет. Хăтлă пурăнма тăрăшакан мал ĕмĕтлĕ Александр Иванович та, мăшăрĕ пекех, çав тери тарават та вашават çын. Ача çуртĕнчи пурнăç хыççăн Юльăпа Артем ку кил-çуртра хăйсене çăтмахри пекех туяççĕ. Ăшă та ырă кăмăллă Алена Владимировнăпа Александр Иванович кун çути парнеленĕ ашшĕ-амăшĕнчен те çывăхрах вĕсемшĕн.

**Елена АТАМАНОВА.**

КИЛ-ЙЫШ

# Епле лайăх эсĕ пурри!

Урамра тĕттĕм… Пурте тутлă ыйха путнă… Таврара шăплăх хуçаланать. Эпĕ темиçе сехет ĕнтĕ сĕтел хушшинче çемье альбомне пăхса ларатăп. Вăл манăн тăвансем, манăн юратнă атте-анне пирки. Чылай сăнӳкерчĕк хура-шурă тĕслĕ пулин те, пĕлтерĕшне çухатман, вĕсенче хамăн аттепе аннене уйăрса илетĕп.

Пирĕн çемье альбомĕн хуплашки кăвак тĕслĕ бархатран, шалти картона сăнӳкерчĕк вырнаçтарма икĕ тĕлте тăватă енчен касса тухнă. Кунашкал альбомсем кашни çемьерех пур ахăр.

Акă пĕр страницине уçрăм. Унта фермăран ывăнса таврăннă асаттен сăнне куртăм. Тем пек ĕшенсен те вăл ăшшăн кулать, мĕншĕн тесен ман асатте хăйĕн ĕçне питĕ юратнă. Тепĕр сăнӳкерчĕкре – асанне ĕне сăвать. Акă – ачалăхри атте. Вăл кунта, пĕчĕкскер, симĕс курăк тăрăх чупать. Çак ача ман атте иккенне пачах та ĕненес килмест.

Альбом страницисене малалла уçатăп… Пĕрин çине салтак тумĕллĕ аттен сăнӳкерчĕкне вырнаçтарнă. Теприн çинче – çĕнĕ кĕпеллĕ, хĕрлĕ тутăрлă аннен сăнĕ. Малалла вара – аттепе аннен туй сăнӳкерчĕкĕсем. Иккĕшĕ те питĕ хитре.

Пĕр тĕлте эпĕ аннен чĕрçи çинче ларатăп, ăна ăшшăн-ăшшăн ыталатăп. Çакна хăçан, кам ӳкерсе илме пултарнине кулкаласа аса илме тăрăшатăп.

Пĕррехинче пире шкулта «Чи хаклă çын» сочинени çырма хушнăччĕ. Эпĕ хамăн юратнă анне çинчен шăрçалама шухăшларăм. Сĕтел хушшинче питĕ вăрах лартăм, анчах та хам калаваниепле те пуçлаймарăм.

Шурă хут листине айккине илсе хутăм та Иван Бунин сăввисен пуххине уçрăм. «Çуллахи каç» ярăмăн калама çук çепĕç йĕркисем тӳрех чуна ярса илчĕç… Вуланăçемĕн эпĕ çав ыйхăллă ачана пăртак ăмсантăм та. Вăл пĕчĕк, çавăнпа та чĕрçи çине хăпарса ларма та, чуптума та, ыталама та пултарать, хăй кутăнне те кăтартаять. Çывăх çынни юратнă тĕпренчĕкĕшĕн темĕн тума та, тӳперен çăлтăр илсе пама та, хатĕр. Иван Бунинăн амăшĕ те çавнашкалах пулнăн туйăнать.

Çак сăвăра автор çывăх çыннипе ывăлĕ хушшинчи çыхăнăва кăтартать. Иван Бунин амăшĕн юратăвне çуллахи каçпа çыхăнтарнă.

Ача çуралсан тӳпере çăлтăр çуталать теççĕ. Ача кунпа мар, сехетсерен ӳсет, çавна май çăлтăр çуталса-çуталса пырать. Çав çăлтăр унăн тĕпренчĕкне çул кăтартса пынишĕн амăшĕ калама çук телейлĕ. Вăл тӳпере ялкăшнă май ачапа апла нимĕн те пулмĕ.

Мĕн пулса иртет-ха манпа? Манăн анне çумне ачашшăн йăпшăнас, ăна ăшшăн ыталаса илсе асамлă сăмахсем калас килчĕ. Кайран çӳçе тăрмаласа илтĕм те: «Эпĕ сана тӳпе таран юрататăп», – терĕм. Вăл мана епле хытă юратнине хăй те çак сăмахсем урлă пĕлтерет.

Тепĕр кунне вăрантăм та фотоаппарат илсе анне патне чупса пытăм.

Çемье альбомне малалла уçатăп. Акă тĕттĕм каç. Анне ĕçрен таврăннă. Эпĕ кунĕпех урамра выляса ĕшеннĕ хыççăн пӳрте кĕнĕ те кивĕ диван çине вырнаçса ларнă. Юнашарах – анне.

Вĕри кăмака çунать. Асаннен пăланлă кавирĕ, сĕтел çинчи кĕнеке-тетрадь çине лампа çути ӳкет. Пурте ĕçлĕ. Атте хаçат вулать, кам-тăр кĕнеке ярса тытнă. Ахаль ларма юратман анне кăшт тунсăха путнă хыççăн хăйĕн яланхи ĕçне пикенчĕ. Вăл йĕп илсе çекĕлсем шутлама пуçларĕ.

– Аннеçĕм, ку ман валли-и? – ун патне чĕвĕлтетсе чупса пыратăп та çемçе чĕрçи çине хăпарса ларатăп.

– Паллах, чĕппĕм.

– Пар, аннеçĕм…

– Мĕскер ыйтатăн-ха хĕрĕм?

– Ав çав çăлтăра…

Эпĕ тăратăп та аннене аллинчен çавăтса чӳрече патне илсе пыратăп.

– Авă, кур, мĕн чухлĕ вĕсем! Мана чи хитри, чи çутти, ялкăшса куç хĕсекенни кирлĕ.

Анне йăл кулать. Мана пуçран ачашланă май вăрахчен тӳпенелле, манăн пĕчĕк çăлтăрăм çине сăнаса пăхать.

… Эпĕ пуçа çĕклерĕм те аннене куртăм… Вăл та çывăрмасть-мĕн.

Анне манпа юнашар вырнаçса ларчĕ… Эпĕ ун енне çаврăнтăм та хыттăн ыталарăм.

– Манăн юратнă, ырă кăмăллă, ачаш тата питĕ хитре аннеçĕм, эпĕ сана питĕ хытă юрататăп. Хăш чухне кутăнланса тарăхтарнишĕн, санпа килĕшмен сехетсемшĕн каçар мана. Ялан аслă курăнма тăрăшса санпа тавлашнăшăн е тата ытла та пĕчĕк, шухă та итлемен хĕрачана çаврăннăшăн каçар мана.

Анчах та вăхăт шăвать… Шкул çулĕсем те çаплах, пĕр сисĕнми иртсе каяççĕ. Ун чухне йăлтах хам тĕллĕн пурнăçлама, пуриншĕн те яваплăх тытма тивĕ.

Анчах та, манăн юратнăскерĕм, эпĕ шанатăп, эсĕ яланах, хуйхăра та, савăнăçра та пĕрле пулăн, хăвăн юратăвупа ăшăтса тăрăн.

Эпĕ альбома хупма тăнăччĕ ĕнтĕ, анне мана эпĕ шăллăмпа юнашар тĕрлĕ ӳкерчĕк сăрласа ларакан сăнӳкерчĕке кăтартрĕ. Вăл ăна тирпейлĕн çыпăçтарчĕ те çапла каларĕ:

– Кайран çак альбома шăллупа пĕрле малалла тăсăн! Ачăрсене хăвăр аçăр-аннĕр, аслаçăрпа асаннĕр, кукаçăрпа кукамайăр çинчен каласа кăтартăр.

– Сăмах паратăп сана, аннеçĕм… Епле лайăхçке эсĕ пурри!

**Валерия ИВАНОВА.**
Комсомольски районĕ,
Явăш ялĕ.

ПУКАШ ПУТИШĔСЕМ

# Татăлнă...

Тивĕçлĕ канăва тухнă Генукпа Генуç пĕр-пĕрне кураймасăр харкашса пурăнаççĕ. Пахчисем хушшине те карта тахçанах тытнă, çапах шăрăх кунсем çитсен, купăста-хăяр шăвармалли самантсенче, хутшăнма тиветех. Генуçсем пахчине шыв кĕртнĕ, Генуксем – çук.

– Пар-ха! Пăртах йĕпетсе юлам, – тилмĕрет Генукĕ ирĕксĕрех.

– Парăттăм та... Пыршисем татăлса пĕтрĕç çав, – малтанах таткаланă резина шланга кăтартать тепри.

Генук ирĕксĕрех витре йăтса кулата еннелле таплаттарать.

**Анатолий МАКСИМОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

# Кĕнеке çыххи çăлнă

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче ял библиотекисенче вăй хуракансем çĕнĕ кĕнекесене район центрĕнчи лавккаран суйласа илсе килетчĕç.

Услă Пукаш клуб-вулавăш ĕçченĕсем Рена Красновăпа Авдения Чугунова та пĕр хĕл Сĕмĕлти кĕнеке /халĕ Октябрь сали/ лавккине тухса утрĕç. Никифор Мранькkан «Ĕмĕр сакки сарлака», Мария Ухсайăн «Кăра çилсем», ытти çĕнĕ кăларăма суйла-суйла чикрĕç вĕсем михĕ пек хутаççене. Çĕклеме хулпуççи урлă-пирлĕ çакрĕç. Ямпай лаппи текен çĕре çитсен çил-тăман тухать.

Икĕ çамрăк хĕрарăм хытă сукмакран çĕтсе Хурăньялтан инçех те мар ватă хыр патне пырса тухаççĕ. Хыçра икĕ выçă кашкăр уласах чупни курăнать.

Мĕн тумалла? Хайхисем кĕнеке çине пусса хырăн аялти туратĕнчен çакланаççĕ, унтан çӳлелле хăпараççĕ. Ара, вилес килмест-çке!.. Юрать, шкултах турник çинче туртăнас тĕлĕшпе иккĕшĕ те малта пулнă.

Шăлĕсем шаккаççĕ аялта кашкăрсен. Кĕрĕс! тăвать пăшал сасси. Кашамансем тинех тапса сикеççĕ. Пĕри хыр çинчен тӳч! кăна татăлса анать. Перекенни Рена упăшки Володя пулнă. Вăл арăмĕсем вăхăтра çитейменнипе пăшăрханса пăшал çакса хирĕç тухнă.

Паян та Красновсен тата Башкировсен килĕнче «Ĕмĕр сакки сарлака», «Кăра çилсем» кĕнекесем хисеплĕ вырăнта. Вĕсем вулавăш ĕçченĕсен пурнăçне çăлнă-çке.

**ЛИССАППА Тули.**





# Пĕрле тăрăшсан ăнăçу пулатех

**Утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче Раççей следстви органĕсенче ĕçлекенсен кунне çулсерен уявласси çинчен указа 2013 çулта алă пуснă. 1713 çулта I Петĕр патша М.И.Волконскин следстви канцелярине çак кун туса хунă. Патшалăх ертÿçине тÿрремĕнех пăхăнакан, следстви ирттерме пултаракан пĕрремĕш орган пулса тăнă вăл. Унăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри патшалăхра коррупципе çыхăннă ĕç-пуçа сиресси шутланнă.**

Професси уявĕнче РФ Следстви комитечĕн Чăваш Енри ĕçченĕсем тĕп управление пухăнчĕç.

РФ СК ЧР тĕп управленийĕн ертÿçи Александр Мигушов Следстви органĕсен ĕçченĕсен республикăри уйрăмĕн çур çулти ĕç кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ.

Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, республикăра преступленисен шучĕ 4 процент ÿснĕ /7967, пĕлтĕр – 7648/. Çакă чи малтанах вăрласси-çаратасси, улталасси нумайланнипе çыхăннă. Çав вăхăтрах общество вырăнĕсенче тунă преступленисен йышĕ чакнă, 2350-ран 2200-е çитнĕ. Йывăр тата уйрăмах йывăррисем те сахалланнă.

Çур çулта следстви ĕçченĕсем 2600 ытла тĕрĕслев ирттерсе 827 уголовлă ĕç пуçарнă. 649 çын тĕлĕшĕпе судсене 588 ĕç çитернĕ.

Следовательсем палăртнă тăрăх, 6 уйăхра пуçарнă уголовлă ĕçсен пĕтĕмĕшле тăкакĕ 300 миллион тенкĕпе танлашать. Тĕрлĕ мера йышăннăран 174-шне тавăрма май килнĕ. Пурлăха арестлессипе те анлă усă курнă следовательсем. Вĕсем ыйтнипех тĕрлĕ суд 43 млн тенкĕлĕх пурлăха арестленĕ.

Следствен комитечĕ çынна хирĕç тунă – вĕлернĕ е сывлăхне вилмеллех хавшатнă – преступленисемпе тимлĕ ĕçлет. Кун пеккисен шучĕ чакнă /43, пĕлтĕр – 51/. Вĕсене уçăмлатасси те лайăхланнă – 98 процент. 35 тĕслĕхре саккуна ÿсĕрле пăснине те палăртмалла. 12-шне килти йывăр хутшăнусемпе сăлтавламалла.

Тĕрлĕ сăлтава пула малтанхи çулсенчех вĕçлеймен ĕçсенче пăнчă лартассипе те сахал мар пуç ватаççĕ. Кăçал кун пеккисем хальлĕхе – 20.

Коррупципе çыхăннă ĕç-пуçа тĕпчесси те комитетшăн малтанхиллех тĕп шăнărсенчен пĕри. Кăçал кунашкал 183 уголовлă ĕç пуçарнă. Следстви вĕсен пĕтĕмĕшле тăкакне 40 ытла миллион тенкĕлĕх хакланă. Ку пĕлтĕрхинчен 8 хут /!/ нумайрах.

– Хаклă ĕçтешсем, пирĕн тĕп тивĕç пĕлтерĕшлĕ те пысăк. Вăл çăмăл мар, анчах пĕрле тăрăшсан ăнăçу пулатех, – пĕтĕмлетрĕ Александр Петрович.

Следовательсене уявпа ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламларĕ.

– Чи пахи – сире граждансем шанни, ăна малашне те тÿрре кăлармалла пултăр. Чи кирли – кăтартусене лайăх шайра тытса пырасси, йĕркесĕрлĕхе пĕтересси, – терĕ Михаил Васильевич.

Сумлă ытти хăнапа пĕрле следовательсене РФ Патшалăх Думин комитечĕн председателĕн заместителĕ Алена Аршинова та саламларĕ. Ирсерен ĕçе усă кăмăлпа килме, кăссерен киле савăнăçлăн таврăнма сунчĕ.

ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ

# Инкек сăлтавĕсенчен пĕри – ÿсĕр водитель

**Чăваш Енри çулсем çинчи лару-тăрупа паллаштарма ытларикун журналистсене Республикăри ШĔМĕн ÇÇХПИ Управленийĕн ертÿçи Владимир Романов пуçтарчĕ.**

Патшалăх автоинспекцийĕнче ĕçлекенсемшĕн тĕп вырăнта – ÿсĕрле тунă аварисем, ачасене лартса çÿресси, çуран çÿрекенсем ятарлă вырăнта касманран пулнă инкексем, ПАИ ĕçченĕсем взятка илни. Шăпах çак ыйтусем тавра калаçу пуçарчĕ те полици полковникĕ.

Кăçалхи 6 уйăхра республикăри çулсем çинче 624 инкек пулнă, вĕсенче 76 çын вилнĕ /3-шĕ 16 çул тултарман/, 806 çын аманнă /83 ача/. Пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан сахалрах ку. 2007 çулта республикăри çулсем çинче 329 çын вилнĕ, пĕлтĕр – 208. Çакна çул çинчи инкексенче вилнĕ çынсен шутне чакарма хатĕрленĕ федераци ятарлă программи Чăваш Енре лайăх ĕçленипе сăлтавларĕ Владимир Геннадьевич. Ăна 2020 çулченех пурнăçлама палăртнă. Эппин, малашне те ĕçлемелли нумай-ха.

Кăтартусене лайăхлатма трасса çинче хирĕçле икĕ ене уйăракан карта тытни те пулăшнине палăртать Владимир Романов. Кун пек хирĕç килекен машинăпа çапăнас хăрушлăх чакать-çке.

Çул çинчи тепĕр инкек – ÿсĕр водительсем. Вĕсен шучĕ чакать пулин те кашни 7-мĕш авари шăпах вĕсене пула сиксе тухать. 17 çын шăпах çак сăлтава пула вилнĕ. Ÿсĕрле пĕрре çакланнисен те руль умне тепĕр хутчен хĕрĕнкĕ ларма именмеççĕ. Çакна шута илсех нумаях пулмасть çĕнĕлĕх те кĕртнĕччĕ. Халĕ участковăйсен те хăйсен территорийĕнче ÿсĕр водитель тĕлĕшпе протокол çырма ирĕк пур. Ара, куç умĕнчи лайăхрах курăнать-çке.

«Ÿсĕр водитель» операци пирки уйрăм сăмах пулчĕ. Паллах, унăн витĕмĕ пурах. Акă çĕртмен 22-24-мĕшĕсенче çеç республикăра 80 хĕрĕнкĕ водителе чарнă.

– Рейд пуласса пĕлеççĕ-çке. Çав кунсенче те пулин тухас марччĕ. Çук, пурпĕр руль умне лараççĕ, – тĕлĕннине пытармасть Владимир Геннадьевич.

Çул çинчи йĕркесĕрлĕхе палăртма фотофиксаци приборĕсем те пулăшаççĕ. Шăпах вĕсене пула административлă правăна пăснă 320 пин яхăн тĕслĕхе палăртма май килнĕ. Çур çулта правилăсене пăснăшăн 245 миллион тенкĕлĕх штраф хунă, 206-шне шыраса илнĕ те. Малтанхи 20 кунра çуррине çеç тÿлеме ирĕк пурри те витĕм кÿрет-мĕн.

ПАИ ĕçченĕсем преступленисене уçăмлатас ĕçре те палăраççĕ. Вăрланă 28 машинăна пурне те тупнă, агрегат номерĕсене улăштарнă 86 автомашинăна асăрханă.

Хăть те хăш çул çинче те разметка пулмалли паллă. Ку та йĕркене пăхăнма пулăшать. Çав вăхăтрах çуран çÿрекенсен «çутатакан» япала тăхăнмалли йĕрке пурнăçланмасть. Ялти пĕр çын та тĕттĕм вăхăтра çул çинче пынă чухне палăрмасть. Çавăнпах кустăрма айне пулаççĕ те. Машина çутинче ялтăракан тум е тетте хамăра хăрушсăрлăхра туйма пулăшине кашнин пĕлмелле!

– Темле пулсан та чи малта – профилактика. Çынсене хăрушсăрлăха пăхăнма вĕрентесси. Кунта пире эсир те, МИХсем, нумай пулăшатăр, тав сире, – терĕ Владимир Романов.

ÇУЛ ÇИТМЕННИСЕМ

# Ачи йĕркене пăснишĕн ашшĕ-амăшĕ айăплă

**Çул çитменнисемпе яланах тимлĕ пулмалла. Ашшĕ-амăшĕн те, право хуралĕн тĕрлĕ органĕн те. Прокуратура та – вĕсен йышĕнчех. Çул çитменнисем саккуна пăснă е кĕçĕннисене хăйсене кÿрентернĕ тĕслĕхсене асăрхасах тăмалла, вĕсен йышне чакарма ăнтăлмалла. Çак тĕлĕшпе республикăри лару-тăру епле-рех-ши? Кун пирки ЧР Прокуратурин çул çитменнисемпе тата çамрăксемпе ĕçлекен пайĕн ертÿçипе Тамара Шурыгинăпа калаçрăмăр.**

**– Тамара Ивановна, паянхи пĕтĕмĕшле ÿкерчĕк еплерех-ши?**

– Пĕлтĕрхи пĕрремĕш çур çулта çамрăксем саккуна пăснă тĕслĕхсем сасартăк ÿсрĕç. Профилактика органĕсен ĕçне тĕрĕслеме пуçларăмăр та çулталăк вĕçленнĕ тĕле лару-тăрăва йĕркене кĕртрĕмĕр. Кăçал та ăна кусран вĕçертместпĕр. Профилактика тĕлĕшпе ятарлă комплекслă программăсем пурнăçлани хăйĕн çимĕçне паратех. Çавăнпах кăçалхи 6 уйăхра республикăра çул çитменнисем йĕркене пăснă тĕслĕхсен шучĕ те, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 22,1 процент чухлĕ чакнă. Апла пулин те вĕсем – 232.

Чылай кăтартăва лайăхлатрăмăр. Çул çитменнисем мăшкăлланă, çынна вĕлернĕ тĕслĕхсем çук – вĕсем уйрăмах йывăр шутланаççĕ. Наркотиксемпе çыхăннисен шучĕ чакнă. Наркăмăшланнă хыççăн йĕркене пăсни те сахалрах. Анчах ку лăпланмаллине пĕлтермест. Тен, вĕсене тупса палăртасси япăхланнă. Профилактика ырă витĕм кÿнипе те сăлтавлама пулать паллах.

*Çав вăхăтрах Улатăр, Патăрьел, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Çĕрпÿ, Шăмăршă районĕсенче тата Çĕнĕ Шупашкарта кăтартусем япăхланнă.*

Интернет сарăлнă май çĕнĕ йышши преступленисем те аталанаççĕ. Экстремистла материалсем тухаççĕ. Сăмахран, нарăс уйăхĕнче 17 çулти йĕкĕт тĕлĕшĕпе уголовлă ĕç пуçарма тивнĕччĕ. Интернетри сайтсенчен пĕринче хăйĕн страници çинче вăл шăпах çакăн йышши статья вырнаçтарнă. Унсăр пуçне маларах та социаллă сетьсенчен пĕринче ытти халăх патне курайманлăх çуратакан видеофайл кĕртнĕ. Çак икĕ ĕçе пăхса тухма суда ярса панă.

Ÿсĕрле тунă преступленисен шучĕ те ÿснĕ. 31-рен 37-е çитнĕ. Ку та сисчĕвлентерет. Акă йĕркеллĕ çемьере çитĕннĕ икĕ йĕкĕт пуш уйăхĕнче Патăрьелти автовокзалăн иккĕмĕш хутĕнче çул çитмен тепĕр çамрăка çĕçĕпе хăратнă, укça ыйтнă.

Çул çитменнисем тĕлĕшĕпе тунă преступленисен шучĕ чакнă-ха. Апла пулин те ар çыхăнăвне кĕрессишĕн пусмăрлани пур. Çакă пăшăрхантарать те. Тăванĕсем шар кăтартаççĕ-çке. Мĕн çын пĕчĕкскерне чун кÿнине ăнланма йывăр. Епле ăссăр та чунсăр пулмалла!

Çамрăксен хушшинче çаратасси анлă сарăлнă. Ытти преступление чылай чухне ăнăçсăр çемьере çитĕннисем пурнăçлаççĕ, вăрра лайăххисенче ÿснисем те кĕреççĕ. Çакна пулах пĕлтĕр преступленисен йышĕ те ÿсрĕ. Ун чухне кашни тĕслĕхе уйрăммăн тишкертĕмĕр те çакна палăртрăмăр: ашшĕ-амăшĕ ĕçлеме тухса кайнăран аслисен тимлĕхĕсĕр юлнă ывăл-хĕрĕ ют çын пурлăхне хапсăнать.

**– Эппин, ача-пăча саккуна пăсни тÿрремĕнех экономикăпа çыхăннă.**

– Çапла, социаллă сăлтав тетпĕр ăна. Ĕç çукки урăх çĕре кайма хистет. Çакă воспитание те витĕм кÿрет. Унсăр пуçне аслисем эрех ĕçме пуçлаççĕ. Кун пеккисем те ачисем пирки пачах манаççĕ. Кĕçĕннисем каллех тимлĕхсĕр юлаççĕ.

Кунашкаллисене палăртас тĕлĕшпе профилактика субъекчĕсен: полици органĕсен, çул çитменнисемпе ĕçлекенсен, сывлăх сыхлавĕн органĕсен, шкулсен, педагогсен, опекăпа попечительство органĕсен – пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлемелле. Анчах тĕрлĕ тĕрĕслев ирттернĕ чухне çакă пулса пĕтменни куç кĕрет.

Тепĕр чухне шкулти педагогсем ăнăçсăр çемьене асăрхасан та вĕсем пирки пĕлтерме васкамаççĕ. Пĕрисем пĕлмесĕр, теприсем – ятарласа, асăрханса çитерейменшĕн ятласран сыхланаççĕ. Кун пек тĕслĕхсене тупсан прокуратура вĕсен тĕлĕшпе асăрхаттарусем йышăнать.

Çĕнĕ Шупашкарти ĕçтешсем лайăх анализ тунă. Кашни преступление тишкерсе саккуна пăсакансем ытларах социаллă тăлăхсем иккенне палăртнă. Хăть те хăçан та чи малтан сăлтава ашшĕ-амăшĕнче шыramалла çав. Хăшĕсем çуратаççĕ те пачах пăхмаççĕ. Ачасем хăйсемшĕн хăйсем хуçа, тĕслĕх пулса тăраççĕ. Йĕркеллĕ мар вĕт çакă!

2015 çулта шута илнĕ 30 ачаран 25-шĕ – ашшĕ-амăшĕ пур çĕртех тăлăх шутланакансkерсем. Вĕсене е ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарнă, е аслисем тĕрмесенче. Тепĕр чухне тата амăшĕ ача çуратма каять. Ашшĕ çук. Ача килте пĕчченех юлать. Ирĕкре. Кăçалхи çур çулта та тăлăхсен йышне тата 12 ача кĕчĕ. Пĕри çеç хăр тăлăх. Пĕтĕмлетÿ куç умне тухать – аслисен яваплăх çук, ачасем пĕчĕкрен амăшĕн ăшшисĕр çитĕнеççĕ. Усрав çемьере те тĕрлĕрен лару-тăру пулать вĕт. Тепĕр чухне унтан та каялла таврăнма тивет. Çакă пĕтĕмпех çамрăк психикăна витĕм кÿрет.

**– Çул çитменнисем саккуна темиçе хутчен пăснă тĕслĕхсем ÿсни те паллă. Профилактика çителĕксĕррипе çыхăнтармалла-и?**

– Яланах мар. Çемьери лару-тăруран та килет, ачаран хывнă кăмăл-сипетрен. Акă, тĕслĕхрен, В. ашшĕпе тата амăшĕпе пурăннă. Аслисем уйрăлсан ывăлĕ амăшĕпе юлнă. Анчах хĕрарăма тĕрмене лартнă, çавăнпах вăл кукамăшĕпе пурăнма тытăннă. Кайран ăна ятарлă шкула янă, унтан усрав çемье илсе кайнă. Çемйи те йĕркеллĕ, укça-тенкĕ те çителĕклĕ. Çук, В. вăрра çÿренĕ. Пĕрре кăна та мар. Суд пулмалли кун та унта çитеймен вăл, каллех... вăрра кĕнĕ. В.-на воспитани колонине 1,5 çуллăха яма йышăннă. Лайăх çемьенех лекнĕ-çке. Анчах ăна вăрă ĕçĕ илĕртнех, ку йăларан хăпайман вăл. Кунашкаллисене аларан çеç çавăтса та çÿрейместпĕр-çке.

Тепĕр тĕслĕх. Йĕкĕт вĕренме йĕркеллĕ çÿремен. Ашшĕ ĕçлеме аякри хулана çÿренĕ. Çемье те лайăххисен йышĕнченех. Анчах вăл урокра ларас вырăнне вăрра кайнă. Çак тĕслĕхре малтан, паллах, вĕрентекенсене айăплатпăр. Вĕсем ача урока çÿременнине курнă вĕт. Çакна асăрхаса профилактика ытти органне пĕлтермелле пулнă. Асăннă каччă пĕр хутчен çеç те çаратман. Çемьере ирттĕхтернĕ-ши?

Акă Ленин районĕнчи 15-ри каччă та, халĕ 16-ра ĕнтĕ, ушкăнпа темиçе хутчен те вăрра кайнă. Дачăсене çаратнă. Малтанхи хутĕнче çирĕп айăпламан ăна, яваплăхран асăрхаттарнипех хăтарнă. Мĕн тетĕр? Вăл ун хыççăнах тата темиçе хутчен вăрра кайнă. Суд ятарлă шкула ярассипе çеç çырлахмарĕ, ирĕклĕхсĕр хăварчĕ.

Паллах, эпир çул çитменнисене хупса лартассишĕн тăрăшмастпăр. Саккун та кăна хирĕçлет. Тÿрленме хистетпĕр, вăхăт паратпăр. Анчах та преступлени йывăр тума урăхла та май çук. Апла пулин те хăш-пĕр ача каялла йĕркене кĕреймест. Уйрăмах тĕрмене лекнисен психики пăсăлса юлать.

Хăть те мĕнле преступлени сăлтавне те тарăн – çемьере – шырамалла. Çавăнпах аслисен ачисен кашни утăмĕшĕн яваплă пулмалла.

Страницăна Татьяна НАУМОВА хатĕрленĕ.





КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Намăса чăтаймасăр...

Шкулта вĕреннĕ чухнех çăмăлттайлăхпа палăратчĕ Люба. Учительсемпе тавлашма, вĕсене хирĕç чĕнме те именсе тăмастчĕ. «Кача пўрне кăтартсанах ихĕрме тытăнать вăл», – аслăрах çулти тантăшĕсем те пăрăнса утма тытăнчĕç унран. Тăххăрмĕш класс хыççăн пĕр вĕçĕм клуба чупма пуçларĕ хĕр пĕрчи. Паян пĕри, ыран тепри ăсататчĕ ăна киле. Хапха умĕнче сăпайсăррăн ахăлтатни кўршĕри кинемисене те тарăхтаратчĕ. Ытла та пăсăлса каясран шикленсе ашшĕпе амăшĕ Анаткасри йăваш та именчĕк каччăпа хăвăртрах пĕрлештерес терĕç ăна. Сухăр пекех çыпăçнă хĕртен Валера та уйрăлаймарĕ. Люба вунсакăр çул тултарсанах ялта шавлă туй кĕрлеттерчĕç.

Çемьере умлă-хыçлă йыш хушăнчĕ. Çурт лартма тытăннăран Валера Мускавран таврăнмасăр ĕçлерĕ. «Эсĕ тухса кайсанах хапху умне ик-виç тĕрлĕ машина килсе чарăнать, ас ту, шăллăм», – асăрхаттарчĕ пĕррехинче кўршĕри Васçли пичче. Унăн сĕнĕвне пушă сăмах вырăнне хурса хăлхана та чикмерĕ Валера.

Пĕррехинче ĕç çуккипе бригада икĕ кунранах каялла таврăнчĕ. Валера арăмне асăрхаттарма та ĕлкĕреймерĕ, çăмăл машинăпа ир енне килне вĕçтерсе те çитрĕ. Ачисене вăратас мар тесе пўрте хуллен пускаласа кĕчĕ арçын. Уйăх çути ўкнĕрен çутă çутма та васкамарĕ. Çапах та тĕпренчĕкĕсен пўлĕмне вăрттăн та пулин уçса пăхмасăр чăтаймарĕ вăл. Никам та çуккине кура: «Амăшĕпе юнашар пулĕ», – иккĕленмесĕрех арçын тепĕр алăка уçрĕ. Ачисем куç тĕлне пулмарĕç. Люба вара... ют арçын çумĕнче ним туйми çывăрать. Валера алăка хыттăн шаплаттарса хупрĕ те пысăк утăмсемпе хăвăртрах алăк патне васкарĕ. Тĕлĕк-и, чăн-и ку? Ют çурта çакланнăн, пуçĕ арпашăнса кайнăн туйăнчĕ ăна. Кўршĕри Васçли пичче ахальтен каламанмĕн. Люба полиципе хăратнине пăхса тăмарĕ арçын, урса кайнăскер арăмне кăн-кăвак пуличчен хĕнерĕ. Килтен амăшĕ патне тухса кайнă юхха хĕрарăм уйăхран каялла таврăнчĕ, урайĕнче упаленсе çўресе упăшкинчен каçару ыйтрĕ. Чунĕ сивĕннĕ пулин те, арăмне ачисемшĕн каялла йышăнчĕ вăл. Анчах пĕрре шăмă кăшлама вĕреннĕ йытта чарма çук иккен. Питне кĕççе çĕленĕскер пĕринпе, тепринпе явăçрĕ хĕрарăм. Аякка та каймарĕ вăл, намăс пĕлмесĕр ялти арçынсемпех çыхланса арăмĕсемпе хирĕçтерчĕ. Ăна пулах пĕр çемье арканас патнех çитрĕ.

Намăса чăтаймарĕ Валера, никама нимĕн каламасăр ялтан тухса кайрĕ. Акă çулталăк ĕнтĕ вăл ăçтине никам та пĕлмест. Те чĕрĕ, те... Иртĕхсе кайнă Люба никам чаракан çукран кермен пек çуртра савăнса пурăнать. Паян пĕр машина, ыран тепри чарăнать ун патĕнче. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕсем вăрçни те, хĕрарăмсем çўçĕнчен сĕтĕрни те чараймарĕ ăна. «Çынсем пĕр вăхăт калаçаççĕ те, кайран манса каяççĕ. Мана, хитрескерне, ăмсанаççĕ ялти маткасем. Никама та усал тумастăп, хам пурнăçпа хам хуçа», – хăйне хўтĕлеме те пĕлет чупкăн хĕрарăм.

**ГАЛИНА.**
Канаш районĕ.

АХ, АНЧАХ...

Лăпланаймасăр хваттер тăрăх унталла та кунталла утрĕ те утрĕ Света. Кĕсье телефонне аллинчен яма та пĕлмерĕ. Толик патне пĕр вĕçĕм шăнкăравларĕ. Анчах арçын хуравламарĕ. Юлашкинчен тўсĕм пĕтрĕ-ши, мăшăрне урăхла шырама пикенчĕ.

– Итлетĕп, – ыйăхлă илтĕнчĕ лини тепĕр вĕçĕнче кумĕн сасси.

– Толикпе пĕрле мар-ши тесе ыйтасшăнччĕ... Вăратрăм иккен. Каçару ыйтатăп.

– Пĕлетĕн вĕт-ха: эпĕ унпа çўреместĕп. Ăнсăртран пĕрре çакланни те темччен аса илмелĕх çитет. Каллех ўсĕр пулĕ, унсăрăн хальччен таврăнмалла.

– Пĕлетĕп-ха...

– Мĕнле арçынна пĕтертĕн, Света.

# Юратăва сутсан...

– Эсĕ те пулин чуна ан ыраттар. Юрĕ, ырă каç. Тепĕр хутчен каçару ыйтатăп.

...Чăннипех те мĕн тери арçынччĕ Толик! Ăна юратман хĕрарăм та çукчĕ-тĕр. Çўллĕскер, патмарскер, чиперскер. Ĕçре те çаврăнăçуллăччĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче те аптăраса тăмарĕ вăл, çителĕклĕ пурăнмалли майсем çине-çинех тупрĕ. Хăйĕн ĕçне те уçрĕ. Ыттисем ют çĕршывра кăларнă машинăпа ярăнма ĕмĕтленме те шикленнĕ вăхăтра вăл иномарка туянчĕ. Хваттерĕ те виçĕ пўлĕмлĕччĕ. Паллах, çак «çўллĕшне» хăпарма ăна мăшăрĕ Галя пулăшрĕ. Шăпах вăл ăшă сăмах каласа хавхалантарчĕ, вăй-хал хушрĕ.

Питĕ килĕштерсе пурăнатчĕç Гальăпа Толя. Хăна таврашне кайсан та ыттисем ăмсанса пăхатчĕç вĕсене. Хĕрарăмсем арăмĕнчен куç вĕçертместчĕç, унăн капăр кĕписене вăрттăн сăнатчĕç. Арçыннисем те ăнах «авăрлатчĕç». Çук, мăнкăмăлланмарĕ мăшăр. Хăйсем ыттисенчен уйрăлса тăнине ниепле те палăртмарĕ. Çын куçĕ çеç асăрхарĕ çакна. Хытă ăмсанса пăхнăран-ши, телей арканчĕ.

Укçаллă арçын тусĕсемпе тĕрлĕ кафе-хупахра час-часах тĕл пулатчĕ. Вăхăта çапла ирттерни арăмне вĕчĕрхентеретчĕ пулин те кăмăлсăрланнине палăртмастчĕ Галя. Хăть те хăçан та мăшăрне хавхалантарма тăрăшатчĕ. Толик вара арăмне хисеплерĕ, анчах çамрăк хĕрсене те куçран вĕçертмерĕ. Çапла паллашрĕç те пĕррехинче Светăпа. Мĕнпе аташтарчĕ-ши вăл арçын пуçне? Анчах пике Толике хăй майлă çавăрчех. «Тухатланă» текен те пулчĕ каярахпа. Çамрăк юн вĕрирех тĕр-çав. Пиçĕхнĕскерне çакă та астарчĕ. Киленĕве мала хурса арçын килне те таврăнма пăрахрĕ.

Мăшăрĕ сивĕннине туйрĕ Галя, анчах сивĕ пĕр сăмах та каламарĕ вăл. Пĕтĕм ăшăлăхпа çепĕçлĕхне парнеленĕ арçынна ўпкелемерĕ. Упăшки уйрăлма шут тытнине пĕлтерсен те хирĕçлемерĕ. Йывăр пулчĕ, паллах, анчах пуç усмарĕ.

Толик килĕнчен тухса кайнă чухне икĕ ывăлĕ шкулта вĕренетчĕç-ха. Шăкăл-шăкăл пурăнакан ашшĕпе амăшĕ текех иккĕшĕ юнашар пулмасса йывăра илчĕç вĕсем. Çавăнпах ашшĕпе питех хутшăнасшăн пулмарĕç. Мĕн каласси, Света та Тольăна малтанхи çемйи патне кайса çўреме тăрăшсах чарчĕ. Миçе хутчен çапăçмарĕç-ши вĕсем куншăн? Тĕрĕссипе тавлашмалли-харкашмалли тăтăшах тупăнчĕ.

Хваттерпе пĕрле машинине те çемйине парса хăварни те вĕчĕрхентерчĕ çамрăк хĕрарăма. Ачисене укçа-тенкĕпе пулăшни те тарăхтарчĕ. Сахалрах парсан та юрать имĕш. Малтанах çакă сисĕнместчĕ-ха, ĕç кал-кал пыратчĕ те тухăçĕ те аванччĕ. Анчах тем пулчĕ. Такăнчĕ Толик. Ĕçĕнче йывăрлăхсем пуçланчĕç. Кĕтмен çĕртен сике-сике тухрĕç вĕсем. Пĕрне йĕркелесе çеç ярать пек, тепĕр вырăнта татăлать. Апла пулин те пĕр пўлĕмлĕ хваттер туянчĕçех. Тимĕр урхамах та илчĕç.

Света Толике урăххисем çумне хушнăран мĕн чухлĕ çапăçмарĕç-ши тата! Ĕçре те йывăр самантра çамрăк арăм кĕвĕçнине илтни пушшех тарăхтарчĕ арçынна. Çакăн пек чухне вăл Гальăна тăтăш аса илчĕ. Çемьене упрайманшăн кулянчĕ те. Анчах каялла тавăрма çук ĕнтĕ. Галя та килĕшес çук. Света та ача çуратма хатĕрленет...

Тамăкра çунма тытăнчĕ арçын. Ĕç куллен аталанма мар, пĕтсе пычĕ. Мăшăрĕ çирĕп тĕрев парáймарĕ, кашни вак-тĕвекшĕн мăрларĕ. Çакна чăтаймасăр Толик ĕçкĕ авăрнех путрĕ. Кунран кун ытларах та ытларах илĕртрĕ ăна «çутти». Черкке чунне сисет пек туйăнчĕ. Çук, пулăшмарĕ, паллах, йўççи, пĕр вăхăта çеç пĕтĕмпех манăçтарчĕ.

Толик пурнăç çине алă сулчĕ темелле-ши? Ĕçĕ те саланнăпа пĕрех. Аран-аран çеç тытăнса пырать. Укçа-тенкĕ çитменрен Света та пĕрмай măкăртатать. Хĕрне Ксюшăна ура çине тăратмалли те хавхалану кўмест.

Чавса çывăх та... çыртма çук çав. Унсăрăн Толик Гальăна улталаман, унăн юратăвне сутман пулĕччĕ.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

ЧУНРИ

# Яланах пĕрле

Çулсем таçта васкаççĕ. Ĕмĕр ытла та хăвăрт иртет. Шел, тытса чарма çук ăна. 50 çултан та каçрăмăр. Верăна вара паянхи кун та манаймастăп.

Йĕпреçре пурăнать ĕлĕкхи чун савни. Ăнмарĕ ăна упăшкипе. Арçынна халь тин улăштарма çук ĕнтĕ. Вера та туслăн çўресе курманскере юратма пултараймарĕ-ши?



Урăлса курман упăшкипе мĕн чухлĕ нуша курмарĕ-ши мĕскĕн хĕрарăм. Виçĕ ачине пĕччене ура çине тăратрĕ.

Пĕрешкел шăпа пирĕн. Эпĕ те юратмасăрах авлантăм. Пурăна-киле мăшăрăма хăнăхрăм пулмалла. Чашăк-тирĕк шакăртатасси вара унăн айăпĕпе те, манăннипе те час-часах пулкалать. Тарăхса кайсан пĕр-пĕрне тапăчкипе те, турилккепе те перетпĕр. Кўршĕсем епле чăтаççĕ-ши пире?

Верăна паянхи кун та малтанхи пекех саватăп. Унăн çўçĕ пăртак кăвакарнине те, пичĕ çинчи пĕркеленчĕксене те асăрхамастăп. Маншăн вăл яланах – вунсакăр çулти Вера. Салтакран килсен аннепе паллаштарнă хыççăнхи каç килне леçсе янăшăн халĕ те ўкĕнме пăрахаймастăп. Уншăн никам та мар, пĕр хам айăплă. Вăтанчăк пулнă çав ун чухне. Çавăн пиркиех хам телейĕме вĕçертрĕм мар-и?

...Аннепе паллаштарнă хыççăн Верăпа кĕр мăнтăрĕпе туй кĕрлеттерме калаçса татăлтăмăр. Чунра темшĕн лăпкă марччĕ, савнине çухатассăнах туйăнатчĕ. Пĕр каç сиктерми çўреттĕм кўршĕ яла. Çĕмĕрт айĕнчи сак çинче тул çутăличченех пăшăл пăтти пĕçереттĕмĕр. Юратнă çынран уйрăлма йывăрччĕ мана. Килне кĕме тесе хапха алăкне тытсан тепĕр çур сехетсĕр те хам ытамран вĕçертместĕмччĕ. «Арçынсем савма пĕлмеççĕ», – тесе ахалех калаççĕ çав. Пĕлместпĕр çеç мар, еплерех çунса тĕлкĕшет пирĕн чун.

Ĕçе вырнаçас тесе уйăхран хулана кайрăм. Çав кунах завода вырнаçтарчĕç, пропискӑна тăратрĕç. Савăнăçăма Верăпа пайлас тесе яла вĕçтертĕм. Йĕпреçе çитсенех лайăх мар хыпар илтрĕм. «Санăн савнине вăрласа кĕнĕ», – терĕ кўршĕ хĕрĕ. Анне те тунсăхлă куçпа кĕтсе илчĕ.

Çул хыççăн çул иртрĕ. Икĕ юратнă чун пĕр-пĕринсĕр пурăнаять-и? Маншăн çак çĕр çинче Верăран çывăхрах çын çук. Вăл мана кирек хăçан та ăнланать, хуйха-суйха пусарать. Чылай çул туслă эпир, пире тĕл пулма, пĕр-пĕрне пуçа çухатасла савма халь тин никам та чараймĕ. Çын мĕн калаçни те пĕлтерĕшлĕ мар пирĕншĕн. Шăпи çапла килсе тухнишĕн халь кама айăпламалла-ши? Çавна çеç пĕлетпĕр, пире халь тин никам та уйăраймĕ. Пĕрпĕринчен уйрăм пурăнсан та, чунсем яланах пĕрле пирĕн.

**ВЛАДИМИР.**
Йĕпреç районĕ.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Абрикоспа апельсин варенийĕ



**4 килограмм абрикос, 1 килограмм апельсин, 2 килограмм сахăр кирлĕ.**

Апельсина çумалла, хуппинчен тасатса хăвăра кирлĕ пек турамалла. Абрикос вăррине кăларса икĕ пая уйăрмалла. Улма-çырлана пĕрлештерĕ хыççăн сахăр ярса пăтратмалла. 4-6 сехет лартнă хыççăн çиеле кăпăк тухиччен вĕретмелле. Варени сивĕннĕ хыççăн тепĕр хутчен 5 минут пĕçермелле.

### Повидло

**1 килограмм абрикос, 750 грамм сахăр кирлĕ.**

Абрикоса вăрринчен уйăрмалла, сĕткенĕ юхса тухма темиçе çĕртен вилкăпа шăтармалла, çимĕçе кастрюле вырнаçтармалла, сахăр сапмалла, 10-12 сехетрен вĕретмелле, пăтратсах тăмалла. Кăпăкне илсе вăйсăр çулăм çинче 40 минут пĕçермелле. Сивĕннĕ хыççăн тепĕр 15-20 минут вĕретмелле. Виççĕмĕш хут пĕçерес умĕн блендерпа пăтратмалла. Повидлона вĕреме кĕртнĕ хыççăн çулăм çинче 10-15 минут тытмалла, хатĕр банкăсене вĕрилле тултармалла, хупăпа хупмалла.

### Пахчаçимĕçпе пулă

**Шăмминчен уйăрнă кирек мĕнле пулă, 1-2 сухан, 2-3 çĕрулми, 1 кишĕр, тăвар, пăрăç, 1/2 лимон, пĕçернĕ 1 çăмарта кирлĕ.**

Сухана çурма çавракан, çĕрулмие пысăках мар турамсемпе вакламалла, кишĕре шултра теркăпа вĕтетмелле. Пĕтĕмпех сийпе формăна хумалла, тăвар, пăрăç сапмалла, пахчаçимĕçе хупламалăх шыв ямалла. Çиеле ваклапă пулă хумалла, тăвар, пăрăç, лимон сĕткенĕ сапмалла. Маларах хĕртнĕ духовкăра 20 минут пĕçермелле. Кайран пулă çине теркăпа вĕтетнĕ çăмарта сапмалла, духовкăна 3 минутлăха лартмалла.

### Пломбир

**300 грамм çырла нимĕрĕ, 500 миллилитр шĕвĕ хăйма, 1 банка çăратнă сĕт, 100 грамм сахăр çăнăхĕ, ванилин кирлĕ.**

Хăймана миксерпа пăтратса кăпăклантармалла, çăратнă сĕт, сахăр çăнăхĕ, ванилин хушмалла. Çак хутăша шăнтмăша лартмалла. Пломбира кашни çур сехетре икĕ хутчен пăтратмалла, çырла нимĕрĕ ямалла. 2 сехетрен вилкăпа хутăштармалла.

### Тăпăрчă икерчи

**Чуста çăрма 100 грамм тăпăрчă, 100 грамм услам çу, 1 стакан çăнăх кирлĕ.**

**Ăшне хума 2 çăмарта шуррипе 1 çăмарта сарри, теркăланă сыр, 100 грамм тăпăрчă, 1/2 стакан сĕт, тăвар хатĕрлемелле.**

Çăнăха ирĕлтернĕ услам çупа, тăпăрчăпа пăтратмалла, тăвар хушмалла. Йĕтĕрленĕ чустана çатмана сармалла.

Ăшне хума хатĕрленĕ çимĕçсене хутăштармалла. Çак хутăша чуста çине сармалла. Тăпăрчă икерчине духовкăра 1 сехет пĕçермелле.

### Тăпăрчă хăпартăвĕ

**500 грамм тăпăрчă, 3 çăмарта /саррипе шуррине уйăрмалла/, 5 апат кашăкĕ манна кĕрпи, 3 апат кашăкĕ сахăр, 1 апат кашăкĕ çăнăха кăпăшкалатмалли, исĕм е шур çырли кирлĕ.**

Çимĕçсене /çăмарта шуррисĕр пуçне/ хутăштармалла. Уйрăм савăтра çăмарта шуррине пăтратса кăпăклантармалла. Тăпăрчă хутăшне çăмарта шуррипе пăтратмалла. Тăпăрчă хăпартăвне духовкăра пĕçермелле. Ăна варенипе е хăймапа çимелле.

### Çырлапа, печенипе

**200 миллилитр çырла йогурчĕ, 200 грамм çырла, 50 грамм шăккалат, 100 грамм печени кирлĕ.**

Шăккалата теркăламалла. Çырлана 4 пая касмалла. Печение вĕтетмелле. Çырлана йогуртпа, шăккалатпа пăтратмалла. Çырла хутăшĕпе печение сийлесе стакана тултармалла. Десерта темиçе сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

ЫЙТУ-ХУРАВ

## Инди суханĕ тата кактус

**Хисеплĕ редакци! Эпĕ сирĕн хаçата мĕн тухма тытăннăранпах çырăнса илетĕп. Килте тахçантанпах Инди суханĕ ӳстеретĕп, вăл сыпă ыратнăран лайăх теççĕ. Унпа мĕнле усă курмалла-ши?**

**Тата тепĕр ыйту та пур. Кактус мĕншĕн чечек çурмасть-ши, ăна лартни 4-5 çул та çитет.**

**Т.ГЕРАСИМОВА.**

Йĕпреç районĕ.

Инди суханĕ сыпă ыратнинчен, артритпа артрозран, радикулитран, остеохондрозран тата ытти чылай чиртен сиплет. Хурт-кăпшанкă çыртнине те иртерет. Сыпă ыратнинчен суханăн кивĕ çулçине е сухан касăкне илмелле те хăвăрт çеç ыратакан сыппа сĕрмелле, çиелтен ăшă тутăрпа чĕркемелле. Çакăн хыççăн ӳт хытă кĕçĕтсен тип çу сĕрме пултаратăр.

Инди суханĕн çулçинчен спирт шĕвекĕ хатĕрлеме пултаратăр. Вăл та ыратнине, ӳт тăртаннине иртерет. Шĕвеке çакнашкал хатĕрлеççĕ. Инди суханĕн çулçине касмалла /суханĕ те юрать/, çур литр кĕленчене е банкăна çурри таран тултармалла, çиелтен савăт туличченех эрех е сăмакун ямалла. Лайăх хупса тĕттĕм çĕре лартмалла, пӳлĕм температуринче 21 кун тăрăлтармалла. Шĕвеке хушăран пăтратмалла. Эмел икĕ эрнерен хатĕр те. Ăна сăрăхтармалла мар. Шĕвеке ĕçме юрамасть. Компресса çывăрма выртас умĕн хумалла, çиелтен çăм тутăрпа чĕркемелле.



Кактус чечекре ытла вăрах лармасть, çапах та йĕплĕскер епле çурăлнине курса юлас килет. Хăшĕ-пĕри темиçе сехетренех каялла хупăнать, тепри виç-тăват кун таран та чечекĕне савăнтарать. Ку ӳсен-тăрана тĕрĕс хĕл каçарма пĕлмелле. Шăп çак вăхăтра /чӳк уйăхĕнчен тытăнса пуш уйăхĕччен/ вăл чечек кăчкисене хурать. Ăна хĕлле тĕкĕнмелле мар, сутă, типĕ тата усăрах вырăнта тытмалла. Авăн уйăхĕнчен пуçласа сахалрах шăвармалла тытăнмалла. Хĕлле пачах та шыв сапмалла мар. Кактуса пысăк савăта ан лартăр, тымара çеç кайĕ.

СЫВЛĂХ

## Импĕр квасĕ



Импĕр квасĕ апат ирĕлессине паха витĕм кӳрет, ват хăмпи шыççан пулăшать, организма тасатать, ăшăтать.

Ăна хатĕрлеме 4 апат кашăкĕ импĕр вĕтетнĕ тымарĕ, çур чей кашăкĕ типĕ çĕпре, 1 стакан сахăр, 400 грамм лимон, 1,5 литр шыв кирлĕ.

Çĕпрене 100 миллилитр шыва ярса ирĕлтермелле те пӳлĕмре кăпăкланма пуçличчен тытмалла. Лимон сĕткенне кăлармалла, ыттине вĕттĕн турамалла. Кĕленче савăта шыв тултармалла. Унта сахăр, импĕр, лимон сĕткенĕпе касăкĕсене, çĕпре кĕвелĕкне хушмалла. Банкăна резина перчетке е хăмпă тăхăнтартмалла. Ăна кăштах шăтармалла. Виçĕ кун лартмалла. Хатĕр кваса сивĕтмĕшре уйăх та упрама пулать.

ПУЛАС АМĂШНЕ

## Пахчаçимĕç сиенĕ

**Ача кĕтекен хĕрарăмăн хырăм ӳкес хăрушлăхран сыхланса хăш-пĕр пахчаçимĕçе çимелле мар.**

**Тăварланă тата маринадланă хăяр** çие юлнин иккĕмĕш тапхăрĕнче сиенлĕ, мĕншĕн тесен ку апат хĕрарăм организмĕнчи шывпа тăвар ылмашăвне улăштарать.

**Петрушка** пачах çимелле мар теççĕ. Унсăрăн амалăхăн яка тĕртĕмĕ ӳсет. Ку вара вăхăтсăр çуратас е хырăм ӳкесси патне илсе çитерет.

**Ревень** нумай çисен лĕклентерет. Унсăр пуçне çак çимĕç унта кăшкар ути йӳçекĕ нумаййипе хăрушă. Вăл вара организмри кальцие хăвалать. Çавăн пекех амалăх таврашне юн хăваланипе те сиенлĕ.

**Сельдерей** амалăха ӳстерет.

**Укропа** та малтанхи 3-4 уйăхра висине пĕлсе çимелле.

**Лавр çулçи** амалăх ĕçне вăйлатать, тĕртĕмсем ку тапхăрта хутланни вара хăрушă.

**Пĕтнĕк куракĕпе** апата чи малтанхи тапхăрсенче усă курма сĕнмеççĕ.



САНАНИНЧЕН

## Çанталăк çинчен

❍ Хĕвел пĕлĕте ларсан çанталăк йĕпене каять, çумăр çăвать.

❍ Пĕлĕтлĕ кун хĕвел уяра ларсан ыран каллех çумăр кĕтмелле.

❍ Хĕвеланăç хĕрелни – çумăра.

❍ Хĕвел аннă чух пĕлĕт хĕрелсен тепĕр кун е çумăр пулать, е çил тухать.

❍ Çĕнĕ уйăхла çумăр çусан – уйăхĕпех йĕпе-сапа тăрать.

❍ Уйăх тулсан тăваттăмĕш кунхи çанталăк уйăхĕпех тăсăлать.

❍ Уйăх тулсан пиллĕкмĕш кун çиллĕ пулать.

❍ Çулла пĕлĕт йăрăмлансан – çумăра, хĕлле – ăшша.

❍ Пĕлĕтсем хирĕç-хирĕç чупсассăн çил тухать, çумăр та вăраха тăсăлать.

❍ Çумăр пĕлĕчĕ катăклă тухсассăн çумăр нумая пымасть, тикĕс хăпарсан – вăраха тăсăлать.

❍ Çулла вĕри е ăшă çил вĕрсен çумăр пулать.

❍ Çил улани – çумăра.

❍ Çумăр çунă чухне вăйлă çил тухсан – ырă çанталăка.

❍ Çулла пĕрмай çаврăçил тухсан – типпе.

❍Тĕтре аялта тăрсан – уяра, çӳлелле кайсан – йĕпе-сапана.

❍ Аслати вăрăммăн авăтсан кĕр вăраха тăсăлать теççĕ.

❍ Çуркунне аслати авăтмасăр шыв ăшăнмасть.



УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

Сĕтпе вараланнă япалана çăвиччен сивĕ шывра ислетмелле.

Сăра вараланчăкĕ ăшă шывра çухалать.

Чăмлак хăть те мĕнле пусма таврашĕ çинчен те шăнтсан хăпăнать.

Мăйăр хуппи тытнăран вараланнă алла лимон çутатать.

Мăйăр хуппи пусма таврашне вараласан ăна уксуспа спирт /1:3/ хутăшĕпе сăтăрмалла.

Косметика кремĕпе вараланнă шурă япалана тасатас тесен ăна 10 процентлă нашатырь спирчĕпе йĕпетнĕ ватăпа сăтăрмалла, натри гидросульфатне сапмалла, 3-4 минутран уксус шывĕпе /1:1/ йĕпетмелле.

Духи йĕрне тасатма спирт кирлĕ. Ун хыççăн йĕпе татăкпа сăтăрмалла.

Кăвакарнă пусма таврашне йӳçнĕ сĕтре ислетмелле. Унтан çумалла.

Тутăх йĕрĕ 3-5 минутлăха 80 градуса çити ăшăтнă /эмаль савăтра/ уксус йӳçекне /2 апат кашăкĕ уксуса 1 стакан шыва ямалла/ чиксен пĕтет.

Тутăх йĕрне тасатма çавăн пекех вараланнă вырăна марльăпа чĕркенĕ лимон татăкĕ хуни пулăшать. Ăна вĕри утюгпа якатмалла çеç.

**(Малалли. Пуçламăшĕ 24-28-мĕш номерсенче).**

– Кирлĕ мар ăнлантарма, – аллинчен тытса утрĕ хĕр. – Пĕлетĕп эсĕ мĕн каласса. Çавăнпах ĕнтĕ эпĕ хамăн унччченхи качча та сивĕтрĕм. Суймастăп, пурччĕ ман Шупашкарта чухне пĕрскер, канăç памансқер. Манран малараx агронома вĕренсе тухрĕ, тĕп хуларах юлчĕ. «Санран хула майри тăватăп» , – тесе сĕнкĕлтетсе çӳрерĕ-çӳрерĕ ман хыççăн, мухтанчăкĕпех телейне çухатрĕ, урăххин аллине, сан аллуна, тартрĕ. Эпĕ çавăнпа, санран çыру илсен, малтанах нумай шухăшларăм, ăна-кăна тараса çинчи пек виçсе пăхрăм... Вара ун çырăвĕсене хуравлама пăрахрăм, телефонпа чĕнтерсен те калаçма пымарăм, сан пата хут ятăм. Юратмастăп эп вĕçкĕне.

Ульки акка савăннипе çамрăклансах кайрĕ пулас, хăйне çывăх каччăпа хĕр çине пăхса тăранаймасть, ĕçленĕ вăхăтра та ĕлĕкхи улах юррисене çурма сасăпа юрлакаласа илет. Çунат хушăннă тейĕн.

Курнăçу вăхăчĕ ытла та кĕскеçке, уйрăлу саманчĕ ытла та хăвăрт çитет-çке. Уяв кунĕсем вĕлтлетсе çеç иртсе кайрĕç. Маруçăн ĕç пуçланчĕ. Макçăмăн – вĕренӳ.

Çĕнĕ çул кĕтсе илме Маруç Чулхулана килчĕ. Общежити коменданчĕ ăна хĕрсен пӳлĕмне вырнаçтарчĕ. Шкулти акт залĕнче бал-маскарад пулчĕ. Ирччеnex юрласа-ташласа, вăйăсем выляса савăнчĕç вĕсем. Кăнтăрла Спорт керменне кайрĕç. Мускавсемпе Чулхуласен хоккей вăййипе киленчĕç. Хĕр качча нумай чăрмантармарĕ, каçпа сыв пуллашрĕ те.

Хĕллехи каникулта вара иккĕшĕ те уйрăлмасăр тенĕ пекех çӳрерĕç. Макçăм Маруçа хăнăхса пычĕ. Маруç хăй те ун çумнерех çыпçăннăçемĕн çыпçăнчĕ. Пĕрпĕрне юратнине, пĕр-пĕринсĕр пурăнма пултарайманнине вĕсем кунран-кун вăйлăрах туйса пычĕç.

Ялта ачасене каникула янă хыççăн Мария Николаевна каччи патне васкарĕ. Çут çанталăк хĕл ыйхине сирсе этем кăмăлтуйăмне çĕнĕлле чĕртнĕ, хĕвел ăшшинче çĕр сĕткенĕ сывлăша çĕкленнĕ, тавралăха çурхи шăршă çапнă вăхăтра тĕл пулчĕç вĕсем.

Мĕн тери асран кайми савăнăç кунĕ пулчĕ паян Маруçпа Макçăмшăн! Иккĕшин хушшинче çурхи хĕвел ăшшиллĕ туйăм вылять. Вĕсем Ока Атăла юхса кĕнĕ тĕле, чăнкă çыран хĕрне, пырса тăчĕç. Çӳлтен тавралăх ывăç тупанĕ çинчи пек курăнать: Канавино, Сормово, Автозавод районĕсем, Атăлăн сулахай çыранĕнчи улăхсем, вĕтлĕх вăрмансем, кӳлĕсем, Бор хули... Ир килнĕ çуркунне хулана тахçанах юртан тасатнă. Окапа Атăл та пăр юхтарса пĕтернĕ. Маруç каччине сылтăм хулĕнчен çавăрса тытрĕ те сулахай аллинчи чечекпе питĕнчен, сăмсинчен çепĕççĕн тĕккелерĕ. Макçăм чечеке çыртса илесшĕн çăварне кап та кап тутарчĕ. Хĕрĕ те карт! туртать те чечеке, каччи вара сывлăш çăтса юлать.

– Эх, эсĕ, ман чечек сачĕ, – тет те Макçăм, иртен-çӳренрен вăтанмасăрах Маруçа ыталаса хăй тавра çавăрать. Хĕр ăна чечекпе çара ĕнсинчен кăтăклать.

– Хăвăн чечек çыххине аса илтĕн-им? – ыйтуллăн пăхрĕ Маруç ун куçĕнчен. – Сан аллунтан чи пирвай илнĕ çав чечек çыххине эпĕ манмарăм, сыхласа усрарăм, кунтах, сан патнах, илсе килтĕм, тĕрĕс-тĕкелех. Ăна эпĕ никама та тыттарман, сан валли, ĕмĕрĕпе асăнса пурăнмалăх упрарăм. Хăв шухăшланă пекех савăк пулĕ сад пахчинче. Яланах хип-хитре чечексем ешерĕç унта... Эпир вĕсене пĕрле ӳстерĕпĕр, вĕсем çине пăхса пĕрле савăнăпăр.

– Ак çапла-и? – тесе Макçăм алă çинчи хĕрне чарăнма пĕлмесĕр çавăрать те çавăрать, кĕпе арки питĕнчен сĕртĕнсе кăтăклантарнипе пуçне ухать, тапăртатать те тапăртатать. – Ак çапла-и? Ак çапла-и?..

– Ӳкеретĕн вĕт, вĕçтерсе яратăн, Макçăм.

– Ӳкерместĕп те, вĕçтерсе те ямастăп пĕччен. Вĕçес пулсан та иккĕн вĕçетпĕр, пĕрле, юнашар. Авă çав чарлансенчен пĕрин çине ларатпăр та, Атăл тăрăх Шупашкаралла ярăнатпăр, – хашкахашка калаçать Макçăм.

Общежитие вĕсем тĕттĕм пуларахпа тин çаврăнса çитрĕç. Макçăм хĕрне çуралнă кун ячĕпе саламларĕ.

## Владимир КУЗЬМИН

# Телей хыççăн чупса

Пӳлĕмре вăл хĕрĕн йăлкăшакан куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ те шăппăн ыйтрĕ:

– Ман валли çеç упрарăм терĕн-и-ха пурнăç чечекне, юратнă Маруçăм?

Хĕр каччă мăйĕнчен çавăрса тытрĕ, ăна хыттăн-хыттăн чуптурĕ.

Тепĕр кунне вĕсем палăк уçнă çĕре кайрĕç. Уяв урамĕпе утнă май Крутов Маруçăн ирхи хĕвел шевлипе çиçекен кулăллă питкуçне ăмсануллăн сăнарĕ. Маяковский урамĕнче, кĕпер çумĕнче, Атăл хысакĕн илемĕпе киленчĕ, ĕнерхи телейлĕ саманта аса илчĕ. Колонна кĕперпе пырать. Ока çийĕн хăватлă юрă шăранать.

Митинг вĕçленсен вĕсем халăх хушшипе хĕсĕнкелесе Ока çыранне тухрĕç. Маруç тӳпере çунса сӳнекен ракетăсем еннелле тĕллесе кăтартрĕ:

– Пăх-ха, Макçăм, пăхсам! Епле илемлĕ! Миçе пин-ши унта, миçе тĕс-ши? Пуçласа куратăп фейерверк. Эх, савăнăç! Пурнăçра сайра-хутра тĕл пулакан телей кунĕ паян пирĕн. Каллех ракетăсем чечек пулса саланчĕç. Пăхсам ĕнтĕ...

Çамрăк тирек çумĕнче тăракан Макçăм çӳлелле пăхса илнĕ хыççăн куç тĕлне пулнă тепĕр тĕлĕнмелле ӳкерчĕке сăнама пуçларĕ. Ак тамаша! Çыранран Линăпа çар капитанĕ, упăшки пулас, аташа-аташа мекеçленсе хăпараççĕ. Лина йăрăс кĕлетки çине çӳхе плащ çакса янă, шапшурă пушмакпа. Урлă-пирлĕ пускаланипе ури хушăран çӳлеллех çуталса каять, чăп-чăмăр тăпăлкка пĕççисем аялти кĕпин кĕрен тĕслĕ чĕнтĕрĕпе выляççĕ. Маруç çаплах пĕлĕтри чечек кăшăлне сăнать-ха.

– Маруç! Максим Максимович! Мĕн мăшкăлласа пăхса тăратăр? Пулăшăр-ха!

Лина сассине илтнипе-ши, Маруç картах сикрĕ. Пĕрле ӳснĕ, шкулта пĕрле вĕреннĕ тантăшĕсене çакăнта курасса кĕтмен-çке. Макçăм Линăн сулахай аллинчен ярса тытрĕ, ăна çӳлелле туртрĕ. Лина алли хĕрнĕ тимĕр пек пĕçертет. Макçăмăн сылтăм аллинчен Маруç тытнă. Унăн алли те чĕре таппине вăйлатать, çан-çурăма хĕртет. Икĕ енчен икĕ вут-çулăм – икĕ хĕрарăм çунтарать. «Хăшĕ вĕрирех-ха, хăшĕ вăйлăрах? Хăшĕ? Кала-ха, чĕрем?» – пуçра шухăш вĕлтлетсе илчĕ. Хăлхара асамлă сасă илтĕнчĕ: «Лина-мина хĕрӳрех те хĕрӳрех, иртнĕ юрату хĕрĕвĕ çеç. Вăл саншăн ӳснĕ чечек пулман. Яр çав алла хăвăртрах, пăчăрта хытăрах Маруç аллине. Ку хĕр саншăн çеç çуралса ӳснĕ».

Капитана виççĕн туртса хăпартрĕç-хăпартрĕçех. Вăйĕ пĕтнипе хашкана ернĕ Лина аранаран сывлăш çавăрса ячĕ, аллисене пĕç çумне шарт та шарт çапрĕ:

– Ак тĕнче, мĕнле тĕлĕнмелле тĕлпулу, шутламан-туман çĕртен. Ăçтан сиксе тухрăр эсир? Хăçан кунта килнĕ вара? Ак тĕнче! Максим Максимович, ман тантăша ăçта тупма пĕлнĕ çак эсĕ?

– Шурăмпуç çăлтăрĕ вăл ман, Хурăнвара вĕçсе килнĕ хĕр, – кулчĕ Крутов. – Эпĕ партшкулта вĕренетĕп. Мария Николаевна хула курма килнĕ.

Линăпа Славик вĕсене хăнана чĕнчĕç. Офицер Крутова хулран тытса вокзал еннелле çавăрчĕ, Лина Маруçпа шăкăл-шăкăл калаçса утрĕ.

Сормовăна автобуспа ларса кайрĕç. Тымар ачи вĕçкĕнрех пулас, паллашнă-паллашман çарти ĕçсем çинчен мухтанса илчĕ, хваттерне, арăмне ырласа пĕтереймерĕ, малашнехи карьерине те аса илме манмарĕ.

Васильевсем виççĕмĕш хутра, икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнаççĕ. Çурчĕ çулран аякра. Тавраллах йывăç. Уçă чӳречерен çурхи чечекленӳ шăрши капланса кĕрет. Макçăмпа Маруç кил хушинеллех пăхса тăраççĕ. Акă çăка вулли тăрăх пакша сирпĕнтерсе хăпарса тарчĕ. Икĕ пĕчĕк ача ăна анмашкăн чĕнсе кăчăк туртаççĕ. Лина юнашар чӳречерен кăшкăрчĕ:

– Максимка! Пӳрте!

– Хăшĕ сирĕн ывăл? – Линăран ыйтрĕ Маруç.

– Авă кунталла çаврăнса пăхаканни, – терĕ Лина. – Пĕрлешсессĕн, сисместĕр те акă, кĕçех хăвăрăн та сиксе тухать унашкал каскăн. Маруç, сана эпĕ апат хатĕрлеме чĕнесшĕн. Сан унта, старик, саппас сахалтарах. Хамăра çитĕ те, капитансем килетпĕр тенĕччĕ. Çавна ан ман.

Лина упăшки тухса кайсан Макçăм та кухньăна кĕчĕ, хĕрарăмсене пулăшма шухăшларĕ. «Эпир кунта хамăрах», – терĕ те Лина ăна черккесем, вилкăсем тыттарчĕ. Макçăм тулли турилккесем, апат-çимĕç зала йăтрĕ.

**(Малалли пулать).**

## СĂВĂ СĔВЕМĔ

### Любовь ЛĔПĔШПИ

## Калаçу

Мĕн çинчен пăшăлтатать-ши çумăр
Кантăкран хуллен шакканă май?
Тен, каласшăн,
– Çывăрса ан юлăр!
Килменни пулать-çке ман чылай!

Кĕтсе илĕр, чӳхенсе тасалăр!
Çул тусанĕ ларчĕ пуль пайтах,
Йывăççем те ав çăваççĕ алă
Ăшă çумăрпа хавасланса́х!

Сарăхма пуçланă халсăр курăк
Киленсе чӳхенчĕ темĕнччен.
– Ăшă çумăр, ан кĕттерччĕ урăх
Чун-чĕре çунса кĕллениччен!
Сар хĕвелĕ вăл анне пек ăшă,
Ун çутисĕр пурнăç çук паллах.
Ăшă çумăр та кирлех пĕр хушă,
Çут тĕнчешĕн эс атте майлах.

Иксĕр те пулсан – çу кунĕ тулăх,
Асамат кĕперĕ пек пуян.
Туллиех пахча, вăрман та улăх,
Чӳхенет шывпа сĕвек çыран…

Çапларах пуплерĕ ешĕл курăк
Çумăра чылай курманнипе.
Лешĕ парнелерĕ сиплĕ нӳрĕк,
Чăшăл-чăшăл çурĕ çĕрĕпе…

## Улăхра

Çитмĕл çич курăкран тĕртнĕ ешĕл кавир
Тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕспе астарать.
Сывлăмпа чечексем савăнаççĕ ку ир,
Пылак шăршă пуça çавăрать.
Ĕнтĕ хурăн çырли пиçсе çитнĕ ирех,
Çакса тухнă пылак шăрçине.
Курăнать аякран юн тумламĕ пекех,
Асăрхаччăр часрах, тет, хăйне.

Мăшăр лĕпĕш вĕçет хумханса сывлăшра,
Калăн – чĕрĕлнĕ икĕ чечек!
Ак уй-хир çийĕнче кăшт вылярĕ ăрша,
Кĕç ыраш та пулать ылтăн пек.

Ытарми илеме çупăрлатăп куçпа
Çуллахи çутă сывлăмлă ир.
Таçталла астарать, йĕрленсе сукмакпа,
Çитмĕл çичĕ чечеклĕ кавир.



## Ĕççи

Ĕççи пуçланчĕ. Утăçи.
Уйра çулать мăнаçлă трактор.
Юрлать хаваслăн ун çĕççи,
Çу кунĕпе усă куратпăр.

Пахчасенче те ĕç хĕрӳ.
Ав мотоблок çулмашкăн тухнă.
Теприн нумай ĕне-пăру,
Чылай вăл утă çулнă, пухнă.
Тем тĕрлĕ техника куллен
Тĕрев парать пире ку тапхăр.
Анчах, иртсен те çитмĕлтен,
Мучи валли те ĕç пурах-тăр.

Ялта çукрах ун пек ăста,
Çава шаккать – хăй евĕр çемĕ –
Шак! шак! вĕçет сасси таçта
Çут мăлатук мĕлтлетнĕçемĕн.

Ĕçленĕ май шӳтлет мучи,
Çапла хаваслă унăн кăмăл,
Тек тĕрĕслет хăй,
– Çивĕч-и?
Çава вăл пултăр харсăр, çăмăл!

Ун шур çӳçне те çил ачи
Çĕн утă шăршипе лăпкарĕ,
Ĕççи пуçланчĕ. Утăçи.
Халь ĕçлемесĕр кам-ха ларĕ?

Вăштик-вăштик юрлать вара
Çава чĕр курăк ӳкнĕçемĕн.
Ĕç ӳсĕнет чăн туслăхра,
Пĕр чăмăрта – ĕççи илемĕ!

**Çак арçын 15 çул аборт тунă ачасене пытарса пурăннă. Пĕрре-хинче вара ун патне хырăм пăрахас шухăшлă хĕрарăмсем пынă...**

Тонг больницăна ача кĕтекен арăмĕпе пĕрле кайнă. Черет кĕтсе ларнă май хĕрарăмсене сăнанă. Лешсем тухтăр пÿлĕмне кĕнĕ те каялла... макăрса тухнă. Ачасăр... Мĕн амакĕ? Мĕн пулса иртнине тÿрех ăнланса та илеймен-ха Тонг. Каярахпа кăна инкек пĕлтерĕшне туйнă. Çакна ăнланман арçын – варта тĕвĕленнĕ ачаран епле хăпма пулать-ха? Вĕлернех пулать-çке ку. Çитменнине, пытармаççĕ те ачасене...

Тонг çакна лăпкăн йышăнма пултарайман. Хон Том тăвĕ çывăхĕнче вăл хăйĕн укçине тÿлесе çĕр туяннă. Унта амăшĕсем хырăм пăрахнине пула çут тĕнчене килсе те ĕлкĕреймен ачасене пытарма тĕв тунă. Паллах, çакăн валли малтанах госпитальтен ирĕк ыйтса илнĕ. Çапла майпа Тонг малтанхи çулсенче 10000



чи ачасене хăйĕн хÿттине пама сĕннĕ. Кĕçех хăй вăхăтĕнче хурлăхпа тулнă çăва çинче çурт ÿссе ларнă. Унта 100 ытла ача хÿтлĕх тата çемье ăшшине тупнă.

Чăн та, Тонг тÿрех асăрхаттарнă – пепкесене амăшĕсем хăть те хăш самантра каялла илме пултараççĕ: укçа-тенкĕ ыйтăвне татса парсан. Хăйĕн çемйине йышăннă ачасене арпаштарас мар тесе Тонг вĕсем валли ачаш хушма ятсем тупса панă. Сăмахран, "Вин" /чыс/ е тата "Там" /чĕре/. Ачасем пурте амăшĕн хушаматне сыхласа хăварнă. Çавăн пекех Тонг та вĕсене хăйĕн хушаматне панă.

"Эпĕ мĕн юлашки сывлăшăм тухиччен пурнăçласа пырăп çакна, – тет нумай ача ашшĕ. – Эпĕ çак тĕнчерен кайнă хыççăн ачамсем, ман пекех, ыттисене пулăшасса шанас килет".

Сăнÿкерчĕкри ачасен куçĕсем шевле сапалаççĕ. Тонг пек ашшĕнчен вĕсен вĕренмелли пурах.

/"Fishki.net"/.

# Çăва çинчи... Ача çурчĕ





ытла ачана çĕрпе хупланă. Анчах та Вьетнам арçыннин тĕп тĕллевĕ ку пулман-ха. Çăва çине пырса курнă хĕрарăмсем текех хырăм пăрахмасса шаннă арçын...

Чăн та, вăл палăртни пурнăçа кĕнĕ темелле. Хĕрарăмсен пысăк пайĕ теветкеллĕ çак утăма нумай чухне укçа-тенкĕ йывăрлăхĕсене пула тунă – ача ÿстересси мĕн тери яваплине аван ăнланнă вĕсем. Анчах та нухрат капла та çитсе пыман. Çапла вара тата тепĕр пепке çемьере ытлашши çăвара кăна çавраннă. Çакăн пек хĕрарăмсем Тонгран пулăшу ыйтма пуçланă. Анчах та арçын хуравĕ пурне те аптратса янă. Тонг... нушаллă пурăнакан çемьесен-

## Индире кăкăр сĕчĕн аппарачĕсене вырнаçтарма пуçласшăн

**Индири Пудучерри хулинчи Джавахарлал Неру ячĕллĕ аслă шкул студенчĕсем ятарлă аппарат шухăшласа кăларнă. Унта кăкăр сĕтне упрама пулать. Кун пек автоматсене вăхăтран маларах çуралнă ачасене сиплекен пур больницăна та вырнаçтарасшăн.**



Автомата Amudham Thaippal Maiyam е АТМ ят панă. "Нектар", "Кăкăр сĕчĕ", "Центр" тесе куçать ку.

Институт директорĕ С.Париджа палăртнă тăрăх, JIPMER больницинче уйăхсерен 1,5 пин ача çуралать. Вĕсен 30-а яхăн проценчĕ çут тĕнчене палăртнинчен маларах килет. Паллах, ун пек чухне вĕсен кĕлетке йывăрăшĕ те нормăран самай пĕчĕкрех. Ун пеккисене вара кăкăр сĕчĕ пушшех те кирлĕ. Çак аппаратпа усă курса тĕрлĕ сăлтава пула амăшĕ кăкăр çитереймен пепкесене чи малтан пулăшма палăртнă.

Донор сĕтне çак аппаратах малтан 62,5 градус таран ăшăтĕ, унтан пÿлĕм температури таран сивĕтĕ. Çапла майпа пĕчĕккисерсемшĕн нимĕнле бактери те хăрушă пулмĕ, çав вăхăтрах биохими тата иммун тытăмĕ енчен ку шĕвек сиплĕхне йăлтах сыхласа хăварĕ. Донорсем чи малтанах çак больницăри хĕрарăмсемех пулĕç. Çавăн пекех – хăйсен сĕчĕ ытлашшипех нумай тухакансем.

ПУЛАТЬ ВĔТ!

## Хĕрарăм 72 килограмм таран начарланнă

**Ачисемпе пĕрле парка кайсан амăшне... аттракционпа усă курма чарнă. Çакăншăн пĕр кÿреннĕ, пĕр тарăхнă хĕрарăм çине тăрсах начарланма тĕв тунă. Палăртнине пурнăçа кĕртнĕ хĕрарăм каярахпа... илем конкурсĕнче çĕнтернĕ.**

Форт-Уэйнра /Индиана штачĕ/ пурăнакан 30 çулти Стефани Чавез 140 килограма яхăн тайнă. Ултă çул каялла вăл мăшăрĕпе тата ывăлĕпе кану паркне кайнă. Анчах та паркра ĕçлекенсем ăна çемйипе пĕрле аттракциона ларма ирĕк паман – вĕсене хĕрарăмăн кĕлетке виçи хăратнă. Стефани çакăн хыççăн çĕрĕпе макăрнă. Тарăхнă хĕрарăм пĕр тăхтаса тăмасăр начарланма тĕв тунă. Анчах та вăхăт иртнĕ, хĕрарăмăн диетăна пăхăнма та, спортпа туслашма та ниепле те вăхăт та, вăй та çитмен. Паллах, çакна пула ытлашши килограмсем те ниçта та çухалман.

2013 çулта Стефани иккĕмĕш ывăлне кун çути парнеленĕ. Амăшĕн самăрлăх чирне пула пепке те сывах çуралман. Çавна пула ăна пĕчĕклех васкавлă майпа операци тума тивнĕ. Çакăн хыççăн вара хĕрарăм хăйĕн пурнăçне çине тăрсах тĕпрен улăштарма шухăшланă.



"Çичĕ эрнери ывăлăма операцие илсе кайни чунчĕреме кисретрĕ, – каласа кăтартнă каярахпа Стефани. – Хама сăмах патăм – нимрен те хăрамăп, сывлăхăма çирĕплетме тăрăшăп. Çак кун манăн куçăм уçăлнă пек пулчĕ".

Стефани вырăнти спортзал тренерĕпе калаçнă. Начарланас тĕллевпе иккĕшĕ тренировкăсен тата диета планне хатĕрленĕ.



"Малтанах питĕ йывăр пулчĕ, – аса илнĕ Стефани. – Пĕр хусканăва та аран-аран тăваттăм. Анчах та кунсерен вăй хушăнса пынине туйма пуçларăм. Малтанах чăтма та пултарайман апат-çимĕç киленÿ кÿме пуçларĕ. Хама çĕнĕрен çуралнă пек туйма пуçларăм. Урама тухса çÿреме вăтанмастăм ĕнтĕ. Хама шеллеме пăрахрăм. Кашни пĕчĕк çитĕнĕве асра тытаттăм. Сăмахран, квартал тавра çавраннă май сывлăш пÿлĕнме пăрахрĕ... Паркра аслă ывăлăмпа чиперех вылямa пуçларăм. Тинех пурнăç тутине туллин туйса илтĕм темелле!"

Икĕ çулта вăл 72 килограмм таран чакнă. 2015 çулта вара World Beauty Fitness Fashion /WBFF/ илем конкурсне хутшăнмашкăн та хăраман, хăйĕн çĕнĕ, хитре, йăрăс кĕлеткине подиум тăрăх утса кăтартнă. Стефани çавăн чухне пĕрремĕш хут бикини тăхăннă. Чавез самăрлăхран хăпса начарланма пултарнă хĕрарăмсен номинацийĕнче çĕнтернĕ.

Стефани малашлăха çирĕп палăртать халĕ. Вăл хăй те тренер пуласшăн тата конкурсра чиперуксемпе тепĕр хут вăй виçсе пăхасшăн. Тепĕр тĕллев те пур-ха унăн – икĕ ача амăшĕ хăйне тахçан ларма ирĕк паман аттракционпа пурпĕр ярăнасшăн.

/"Deti.mail.ru"/.



Ипотека илнĕ хыççăн Ванькăпа Даша сухари мĕн тери тутлине ăнланнă.

* * *

Тухтăр:
– Чи аялти йĕркине вулăр-ха.
Арсын:
– Пултараймастăп.
Тухтăр:
– Ăнланмалла! Аякрине курмастăр эсир.
Арсын:
– Вулама пĕлменни çитмест, халĕ тата аякрине курма пăрахрăм иккен!

* * *

## И-ХИ-ХИК

Килте ларатăп, кĕнеке вулатăп. Ывăлăм килчĕ. Ман çине тĕлĕнсе пăхать.
– Мĕн, Интернет ĕçлемест-им?

* * *

– Танюша, санăн качча тухма вăхăт.
– Хам та пĕлетĕп-ха... Вĕçĕмех санăн упăшку пирки шухăшлатăп...
– Манăн упăшка пирки-и?!
– Аха çав... Çавăн пек тăмсай лексен мĕнле пурăнмалла тет унпа?!

* * *

– Тухтăр, сĕнӳ парăр, мĕн тумалла? Эпĕ ют арăмсемпе çывăратăп, уншăн вĕсен упăшкисем хĕнеççĕ мана...
– Э, апла санăн хĕсмете каймалла, тен, унта кăшт тăн кĕрĕ?
Пĕр вăхăтран.
– Тавах, тухтăр, пулăшнăшăн! Питĕ лайăх сĕнӳ патăр эсир мана.
– Текех ют арăмсемпе çывăрмастăр-и?
– Мĕнлерех çывăратăп-ха, анчах та халĕ 45 çеккунт хушшинче чашт! кăна тăхăнатăп!

* * *

– Ăçта каятпăр: сан патна е ман пата?
– Мĕншĕн ун пек шухăшлатăн вара эсĕ ман пирки?
– Атьăр чăнлăха пытармастпăр. 35 çулти хĕрарăм карбюраторсен куравĕнче мĕн туса çӳретĕр тата?

* * *

– Ирхи пилĕк сехетре киле кам килчĕ вара?
– Кушак. Ăна кĕртес тесе тăрса алăк уçрăм.

* * *

– Сирĕн шăлсем питĕ хитре.
– Аннерен ку.
– А-а-а... Юрарĕ пулсан – аван.

* * *

Ирхине, тĕкĕр умĕнче.
– Хăвăртрах начарланас пулать.
Каçхине сивĕтмĕш умĕнче.
– А, мĕнле пур – çапла юратăр.

* * *

Шăши эрех кĕленчине кĕрсе ӳкнĕ. Тапаланать-тапаланать, ниепле те тухаймасть. Инçех мар кушак иртсе пынине курать хайхи.
– Кушак тус, тухма пулăшсамччĕ мана çакăнтан, вара эпĕ йăлтах санăн пулăп!
Кушака кун пек перспектива питĕ килĕшет. Хайхи урипе кĕленчене тĕкет те, лешĕ кайса ӳкет. Шăши сиксе тухса шăтăка тарса кĕрет.
– Эй, – кăшкăрать çакна курсан кушак. – Тух кунта! Сăмаха тытас пулать!!!
– Уй, ӳсĕр хĕрарăм сăмаххине шанма пулать-и вара? – найлатать шăши шăтăкран.

* * *

Чикан майри пике патне пынă:
– Атя юмăç пăхса яратăп.
– Эсир пирĕн косметикăпа усă куратăр-и-ха? – çаврăнать ун енне хĕр. – Хитре те çамрăк курăнмашкăн пирĕн каталогра йăлтах пур!
Эйвон хатĕр-хĕтĕрне сутакан пикерен чикансем тапăрĕпех пухăнса аран хăпса пĕтнĕ...

* * *

Кушак шăши тытнă.
– Пурăнас килет-и?
– Кампа? – куçне мăчлаттарать шăши.
– Тьфу! Пĕтĕм аппетита пĕтерчĕ мур! – тарăхать кушак.

* * *

– Эсĕ ĕнтĕ чӳречерен 15 минут урамалла пĕр хусканмасăр пăхса тăратăн. Мĕн пулчĕ?
– Хăп-ха. Уçăлса çӳретĕп, курмастăн-им?

* * *

Çул хĕрринче кинемей тăрать. Алли чĕтрет, сасси аран-аран тухать.
– Çамрăк çыннăм, мана урам леш енне каçма пулăшаймăр-ши?
– Хаваспах. Акă светофор симĕсне çутăлĕ те...
– Хă! Симĕсси çутăлсан хам та каçатăп эпĕ!

* * *

Сыпкаланă арçын киле таврăнать. Алăк шăнкăравне пусать. Хуняшшĕ уçать.
– Килте-и? – аллипе кобрăна евĕрлет çамрăкки.
– Иккĕшĕ те, – хаш! сывласа икĕ кобрăна евĕрлет хуняшшĕ.

* * *

“Одноклассники” сайтра çĕнĕ страница уçрăм. Упăшка патне кĕтĕм. Паллашрăмăр. Туслашрăмăр! Эпĕ – çăвăнмалли, вăл çывăрмалли пӳлĕмсенче. Мана хăй патне чĕнет хайхи. Вăт шухăшлатăп-ха: хамăн каймалла-ши е хайне чĕнсе илмелле-ши?

* * *

Пĕри тĕкĕр умĕнче сулланкаласа тăрать.
– Кур-ха: унта та эпĕ, кунта та! Нимĕн те ăнланмастăп...
Çав самантра такам алăкран шăнкăравлать.
– Кам унта?
– Эпĕ!
– Унта та эпĕ!!!


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. **Песок,** ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-960-307-31-51.**

**БЕТОН**
всех марок.
**Т. 8-960-306-32-54.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. **Бурение.** Д-ка манипул-м. Работаем без выходных. Т. 8-960-307-31-51.

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** пустотелые 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40; полнотелые 20х20х40 – заводские; **ЦЕМЕНТ** – недорого. Кассовый чек. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, кирп. бой, чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т.: 89033581770, 89276689713.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.ГРАВМАССУ,** песок, **щебень, керамзит,** кирп. бой, чернозём. **Дёшево.** Доставка. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**13.Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича. Д-ка. Т. 89033225766.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой, керамблоки, **кольца. Бурение.** Т. 89613393363.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 89053465671.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича, керамзит. Доставка. Т. 89061355241.

**24.Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**27.КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ к/б,** пеноблоки. Манипулятор. Тел. 89033220208, 48-02-08.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**41.Бетон всех марок.** Дёшево. Т. 8-961-340-02-95.

**58.**Сетку-рабицу, заборы, **ворота** (кованые, распашные, гаражные), ДВЕРИ железные, **ОКНА** пластиковые. Кровля и обшивка домов. Козырьки, навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**142.Окна – дёшево.** Т. 89276684382.

**165.Бетон,** раствор. Д-ка. **Скидки.** Без выходных. Т. 89677906116.

**176.ГРАВМАССУ, песок, навоз** и т.д. Работаем – пн.-сбб. Доставка. Низкие цены. Т. 89278502821.

**203.Песок, щебень, гравмассу.** Доставка. Скидки. Т. 8-987-667-97-56.

**214.Керамблоки** /40х20х20, 40х12х20, 40х9х20/ **пропаренные, вибропрессованные.** Недорого. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**223.ОКНА, теплицы,** обшивка домов. **Двери** стальные. Гарантия 15 л. Скидки 40%. Т. 89196624097.

**235.**Тротуарные **ПЛИТЫ, брусчатку,** экопарковку, песок, щебень, **гравмассу,** цемент. Доставка. Укладка. Скидки. Т. 89033220479.

**237.**Профнастил, металлочерепицу, **сайдинг,** водостоки, утеплители. Скидки. **Доставка.** Монтаж. Замер. Т. 8-903-322-04-79.

**273.Бетон, песок, гравмассу.** Доставка. Т. 8-960-306-32-54.

**305.Гравмассу, песок, щебень,** асфальт. **крошку,** торф, чернозём. Т.: 89093005705, 89196567752.

**311.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича. **Д-ка.** Т. 89050282225.

**497.Бетон, раствор от производителя.** Д-ка. Т. 8-937-382-73-53.

**524.Пластиковые ОКНА. Низкие цены.** Т. 89875778963, 21-55-82.

**526.ОКНА пластиковые фирмы «Уютный дом». От 3400 руб. за деревенское окно. Заводское качество. Скидки. Замер, доставка бесплатно. Т. 8-927-668-69-55.**

**529.Бетон** – М 100, М 200, М 250. Дёшево. **Т. 8-906-380-06-92.**

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**28.Ĕне, вăкăр,** тына, **сурăх, сысна** амисем. Т. 8-937-014-49-97.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**147.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-967-794-92-82.

**148.Коров, бычков, тёлок, лошадей.** Т. 8-905-197-73-36.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев, скважин.** Дост-м предметы. Т. 8-967-471-50-70.

**43.Бурение скважин** "под ключ". Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**125.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-906-381-60-37.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**213.Бурение скважин на воду.** Т.: 8-962-321-17-80, 21-17-80.

**236.Кровельные, фасадные работы.** Установка забора. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**349.Услуги мини-экскаватора.** Монтаж водопровода. Канализации «под ключ». Т. 89278625531.

**500.КРОВЛЯ КРЫШИ,** плотницкие работы. Скидки. Т. 8-937-397-24-42.

### ĔÇ/РАБОТА

**522.Строители на монолит** в Московск. обл. Т. 8-960-303-84-89.


### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Эпĕ 39 çулта. Ял пурнăçне килĕштерекен ырă кăмăллă хĕрпе, хĕрарăмпа паллашса çемье çавăрасшăн. Манăн тел. 8-953-018-47-22, шăнкăравлăр.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ” автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 29.07.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 6590. Заказ 2621.